# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаҫачĕ — 1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

39 (9074) № * Эрнекун, 2023 ҫулхи октябрь (юпа) уйăхĕн 6-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


**ХИСЕПЛĔ ВĔРЕНТЕКЕНСЕМ ТАТА ПЕДАГОГИКА ĔҪĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире Учитель кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Ҫакă сире, хăвăра пархатарлă ĕҫе – ҫитĕнекен ăрăва вĕрентессине тата воспитани парассине халалланă харсăр чунлă ҫынсене, пур кăмăлтан тав тума хистекен лайăх сăлтав.

Эсир пĕлӳ ҫеҫ памастăр, тĕрлĕ енлĕн аталаннă ҫынсене пăхса ҫитĕнтеретĕр, вĕсене Тăван ҫĕршыва юратма хăнăхтаратăр, уйрăмах пултаруллисене тупса палăртатăр тата малашлăха ҫул уҫса паратăр.

Сире тăрăшса тата профессие парăнса ĕҫленĕшĕн, пултаруллă пулнăшăн, ҫĕнĕлĕхсемпе анлăн усă курнăшăн тата хăвăрăн вĕренекенĕрсене чунтан юратнăшăн тав тăватăп.

Пурсăра та ҫирĕп сывлăх, ҫĕнĕ ҫĕнтерӳсемпе ҫитĕнӳсем, телей тата мĕнпур лайăххине сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуҫлăхĕ Олег НИКОЛАЕВ.**

**ХАКЛĂ УЧИТЕЛЬСЕМ, ПЕДАГОГИКА ĔҪЧЕНĔСЕМ ТАТА ҪАК ĔҪĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире пурне те хăвăрăн профессиӳ уявĕпе чун-чĕререн саламлатпăр.

Эсир ачасене тарăн пĕлӳ парас, вĕсем чăн-чăн ҫын пулса ӳсчĕр тесе тăрăшатăр. Вĕсене ырă ĕҫсем тума, пĕр-пĕрне пулăшма, йывăрлăхсене ҫĕнтерме вĕрентетĕр. Кирлĕ вăхăтра ырă сĕнӳсем паратăр. Вĕренекенсен пултарулăхне тупса, малалла аталантарас тесе тимлетĕр. Ачасем хăйсен пурнăҫ ҫулне тупчăр тесе хăвăртан килнине йăлтах тăватăр.

Вĕрентӳ сферине аталантарассипе округра сахал мар ĕҫ туса ирттеретпĕр. Малалла та ҫаплах пулĕ.

Пурне те сире ҫирĕп сывлăх, телейлĕ вăрăм кун-ҫул сунатпăр. Ĕҫĕрсем ăнсах пычăр, сывăх ҫыннăрсем савăнтарччăр.

**Муркаш муниципалитет округ пуҫлăхĕ Алексей МАТРОСОВ.**

**Депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн председателĕ Александр ИВАНОВ.**

Йыхрав

## Волейбол ăмăртăвĕ

Октябрĕн 7-мĕшĕнче Муркашра Раççей Федерацийĕн ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн, «Хисеп палли» орден кавалерĕн, Муркаш районĕн хисеплĕ гражданинĕн П. Давыдовăн кусса ҫӳрекен асăну кубокне ҫĕнсе илессишĕн волейбол ăмăртăвне ирттерĕççĕ.

Мероприятие савăнăçлă лару-тăрура «Сывлăх» спорт шкулĕнче 10 сехетре уçаççĕ.

Командăсем ăмăртăва хутшăнма заявка парассин ыйтăвĕпе 8-902-328-94-40 номерпе шăнкăравлама ыйтаççĕ.

Октябрĕн 5-мĕшĕ – Учитель кунĕ

# Тивĕçлисене – тивĕçлĕ наградăсем




*Округри вĕрентӳ ĕçченĕсем хăйсен профессиӳ уявне – Учитель кунне – уявлама октябрĕн 5-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕр шкулне пухăнчĕç. Ĕçре палăрнисене уяв мероприятийĕнче тĕрлĕ шайри наградăпа чысларĕç. Вăл шутра Раççей, республика, округ шайĕнчи наградăсене тивĕçекенсем те пулчĕç. Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Светлана Дмитриева, Шурча шкулĕн вырăс чĕлхипе литературин учителĕ, кăкăр ҫине ҫакмалли Г.Н. Волков ячĕллĕ «За достижения в педагогике» паллăна тивĕç пулчĕ.*

**Владислав ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

**(Уяв мероприятийĕ пирки тĕплĕнрех – хаçатăн ҫитес номерĕнче).**

Республикăра

## Патриот концерчĕ иртнĕ

Шупашкарта «Хамăрăннисене пăрахмастпăр» ыр кăмăллăх патриот концерчĕ иртнĕ. Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕ йĕркеленĕ концерт программи 758 пин тенкĕ пухма май панă. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев палăртнă тăрăх, укçа-тенкĕне ятарлă ҫар операцине хутшăнакансене пулăшма Чăваш Ен аталанăвĕн «Пĕрле» счечĕ ҫине куçарĕç.

Мероприятире Олег Николаев ҫар чаçĕн мотострелоксен 1251-мĕш полкĕн командирне Владислав Матузаса Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Тав ҫырăвне тата асăнмалăх сехет парса чысланă.

**Чувашинформ.**

## Шедеврсемпе паллашаççĕ

Чăваш Енре «Три шедевра Левитана». Выставка Государственной Третьяковской галереи» проект старт илнĕ.

Константин Иванов урамĕнчи 4-мĕш ҫуртри Чăваш патшалăх художество музейĕнчи экспозицире вырăс пейзажисчĕн Исаак Левитанăн виçĕ ӳкерчĕкне вырнаçтарнă – «Свежий ветер. Волга», «Весна. Большая Вода» тата «На Волге».

Произведенисемпе Шупашкарта декабрĕн 3-мĕшĕччен паллашма май пулĕ. Выставкăна пыракансем 19-мĕш ĕмĕрти пейзаж живописĕн шедеврĕсене курса киленеççĕ кăна мар, ҫавăн пекех вĕсем валли унта мастер-классем, лекцисем тата художник пирки вăйă та ирттеççĕ.

## Хуçасăррисем сахалланаççĕ

Чăваш Енре хуçасăр гидротехника сооруженийĕсен шучĕ 30 процента яхăн чакнă. Ку даннăйсене Правительство ҫуртĕнче ирттерекен эрнесеренхи планеркăра асăннă.

«Уйрăм муниципалитет округĕсенче гидротехника сооруженийĕсем йĕркеллĕ шайра мар. Инкек пуласса кĕтмелле мар. Авари лару-тăрăвĕ ан пултăр тесе вăхăтра мерăсем йышăнассипе юридици саманчĕсем те питĕ пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ. Ҫавăнпа та вĕсене учета илессине вăраха ямалла мар», – палăртнă Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев.

Вăл каланă тăрăх, гидротехника сооруженийĕсене вăхăтра регистрацилени хăрушсăрлăха тивĕçтернипе пĕрлех вĕсене юсассипе тата хăтлăлатассипе муниципалитетсене федераци пулăшăвне тивĕçме те май парĕ. Кунсăр пуçне ял хуçалăх ĕçĕсене пурнăçласси шăварассипе çыхăннă чухне пур сооружение те шута илни кирлĕ.

Чăваш Республикин ҫут ҫанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕ Эмир Бедертдинов пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра 554 гидротехника сооруженийĕнчен хуçасăррисем 82. 2021 – 2022 ҫулсенче 19 муниципалитет округ администрацийĕ хуçасăр гидротехника сооруженийĕсен хисепне чакарассипе мероприятисем туса ирттернĕ.

**Хамăр инф.**

Наци проекчĕ

# Ĕçпе тивĕçтерекен центрсем ҫĕнелеççĕ

Муркаш округĕнче Роструд ертӳçин ҫумĕ Ян Талбацкий пулнă, ĕçпе тивĕçтерекен центра модернизацилессин ыйтăвĕсене сӳтсе явнă. «Демографи» наци проекчĕ шайĕнче кăçал 17 пилот регионĕнче ĕçпе тивĕçтерекен мĕнпур центрсене комплекслă модернизацилеççĕ. Татах 12 регион проекта ҫитес ҫул хутшăнать», – палăртнă Ян Талбацкий Муркаш муниципалитет округĕн пуçлăхĕпе Алексей Матросовпа тĕл пулнă чухне.

Ян Петрович тата Алексей Николаевич ĕçпе тивĕçтерекен центрта пулнă. Вĕсемпе пĕрлех ĕçпе тивĕçтерекен центрăн юсаса ҫĕнетнĕ кабинечĕсенче Раççей Ĕç министерствин «ВНИИ труда» компетенцисен федераци центрĕн тата Чăваш Ен Ĕç министерствин представителĕсем те пулса курнă.

Ян Петрович палăртнă тăрăх, ҫĕршывĕпе модернизациленĕ ĕçпе тивĕçтерекен центрсене 175 уçнă ĕнтĕ, татах 429 центр кăçал тата 344 центр ҫитес ҫул уçăлмалла. Модернизациленĕ центрсенче ҫынсене ĕçпе тивĕçтерме каякан вăхăт та, граждансем регистраци учетĕнче тăракан тапхăр та кĕскелеççĕ, персоналăн профессионализмĕпе квалификацийĕ ӳсет.

Ĕçпе тивĕçтерекен центрсене кăçал модернизацилекен пилотлă регионсем шутĕнче Чăваш Республики те пур. Модернизаци ĕçĕсене «Демографи» наци проекчĕн «Содействие занятости» федераци проекчĕ шайĕнче туса ирттереççĕ.

Муркаш округĕнчи ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи Ираида Димитриева каласа панă тăрăх, наци проекчĕ шайĕнче ĕç кабинечĕсене модернизацилеме центра 604,3 пин тенкĕ уйăрса панă. Палăртнă ĕçсене пĕтĕмпех пурнăçланă.

Хăнасем ҫĕнетнĕ кабинетсенче пулса курнă.

Ян Талбацкий ĕç рынокĕнчи лару-тăрупа интересленнĕ. Ираида Димитриева каласа панă тăрăх, Муркаш округĕнче кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 52 ҫын учетра тăрать, вăл шутран ĕçсĕррисем 35 ҫын. Ĕçсĕрлĕх шайĕ 0,2 процентпа танлашать. Ҫулталăк пуçланнăранпа ĕç шыраса центра 385 ҫын килнĕ.

«Содействие занятости» федераци проекчĕ шайĕнче «Работа в России» порталтан 23 ҫынна вĕренме янă, 12-шĕ вĕренме пуҫланă, ĕçе вырнаçтарнисем 7 ҫын.

Ĕçсĕррисене ĕçе йышăннăшăн субсиди илмелли программăна хутшăнма «Работа в России» портал урлă 22 организаци заявка тăратнă, ĕçе 13 гражданина вырнаçтарнă.

Роструд ертӳçин ҫумĕ ҫул ҫитмен ҫамрăксене ĕçе вырнаçтарассин ыйтăвĕпе те интересленнĕ.

Округ пуçлăхĕ Алексей Матросов палăртнă тăрăх, ку тĕллевпе вырăнти бюджетран 350 пин тенкĕ уйăрса панă.

Ян Талбацкий ĕçпе тивĕçтерекен центр коллективĕпе калаçнă, палăртнă задачăсене пурнăçлама ăнăçу суннă.

**Лидия ПАВЛОВА.**

Ҫырăнтару – 2024

## Октябрĕн 2 – 12-мĕшĕсенче – йӳнетнĕ хакпа

**«Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2024 ҫулхи январьтен илсе тăма почта уйрăмĕсенче вунă кун хушши йӳнетнĕ хакпа – 493 тенкĕ те 44 пуспа – ҫырăнтараççĕ.**

**Декада хыççăн 534 тенкĕ те 96 пуспа ҫырăнмалла пулать.**

Хăтлăх

# Муркаш хăтлăланса тирпейленет





– Ай-ай! Питĕ чаплă-çке! Мурката халь хăть хăш енчен те асфальт сарнă тикĕс çулпа пырса кĕретĕн, çавăн пекех тикĕс çулпа тухса каятăн. Маларах вара Муркаш урамĕсенчи çулсем çинче шăтăк-путăкĕ-тумхахĕ сахал марччĕ, – çаппа каласа пачĕ Муркаш тăрăхне пĕлĕшĕ патне килнĕ кӳршĕ округ çынни.

Кунта юптарни нимĕн те çук. Пĕтĕмпех тĕрĕс. Муркаш тăрăх республика çулĕсем иккĕ иртеççĕ. «Автанкасси – Муркаш – Козьмодемьянск» автомобиль çулĕн Муркаш тăрăх иртекен участокне «Хăрушлăхсăр пахалăхлă çулсем» наци проекчĕ шайĕнче пĕлтĕр юсанăччĕ. Кăçал вара асăннă наци проекчĕ шайĕнчех «Муркаш – Турай – «Сура» çулăн Муркашпа Малиновка ялĕсем хушшинчи сыпăкне тĕпрен юсарĕç, вăл шутрах çулăн Муркашри участокне те.

Кунсăр пуçне округ центрĕнчи нумай хваттерлĕ çуртсем таврашĕнчи территорисенче хăтлăх ĕçĕсене те калăпăшлă туса иртернĕ. Октябре 50 çул урамра нумай хваттерлĕ 14-мĕш, 12-мĕш тата 10-мĕш çуртсем патĕнче Петр Краснов уйрăм предприниматель строителĕсем хăтлăх ĕçĕсем пурнăçланă. Тротуарсене çĕнĕрен сарнă, юсанă, бордюрсем тунă, ытти ĕçсене пурнăçланă. Юсав ĕçĕсем валли республика бюджетĕнчен 2 млн та 69 пин тенкĕ, вырăнти бюджетран 155 пин тенкĕ уйăрнă.

Кун пек хăтлăх ĕçĕсенех Парковая урамра та туса иртернĕ ĕнтĕ. Муркаш территори пайĕн пуçлăхĕ Алексей Кириллов каласа панă тăрăх, кунта «Озон» оперштаб ООО строителĕсем тăрăшнă, ĕçсене 1-мĕш, 3 «а» тата 3-мĕш, 5 «а» тата 5-мĕш çуртсем патĕнче пĕтĕмĕшле 7 млн ытла тенкĕлĕх пурнăçланă.

Асăннă общество строителĕсемех халĕ Муркашри татах тепĕр объектра тăрăшаççĕ. Ленин урамĕнчи нумай хваттерлĕ 28-мĕш, 26-мĕш, 30-мĕш, Хĕрлĕ тӳремри 6-мĕшпе 4-мĕш çуртсем патĕнче калăпăшлă ĕçсем пыраççĕ. Техника ĕçлет, хăйăр, вак чул турттараççĕ, сарса тикĕслеççĕ. Кунта та бордюрсем вырнаçтараççĕ, тротуарсем сараççĕ, çӳремелли çулсене анлăлатаççĕ. Иртнĕ эрнере вара асфальт сарас ĕçсем те пуçланчĕç кунта **(сăн ӳкерчĕксенче)**.

Муркаш урамĕсем, нумай хваттерлĕ çуртсем çывăхĕнчи территорисем хăтлăланса илемленни пурне те савăнтарать.

**Владислав ШАПОШНИКОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Округ администрацийĕнче

# Муркаш ен 80 çул тултарать

Муркаш муниципалитет округĕнче пурăнакансем яланах малашлăха пăхаççĕ. Умри пурнăç вара иртнисĕр çук. Çакна та вĕсем яланах асра тытаççĕ.

Умри 2024 çул округра пурăнакансемшĕн хăйне евĕрлĕ пулнипе паллă. Вăл – юбилей çулталăкĕ. Çитес çул пирĕн округ хăй пуçласа йĕркеленнĕренпе 80 çул тултарать. Иртнĕ эрнере ăна хатĕрленсе иртterme çирĕплетнĕ йĕркелӳ комитечĕн пĕрремĕш ларăвĕ пулчĕ. Ăна йĕркелӳ комитечĕн председателĕ, муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Алексей Матросов иртерчĕ.

Палăртмалла, округра савăнăçлă лару-тăрăва хатĕрленсе иртерме ĕç планне туса хатĕрленĕ. Унăн кашни утăмĕ йĕркелӳ комитечĕн аллинче. Культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ Любовь Рыжкова каланă тăрăх, хальхи вăхăтра округ пурнăçне сăнлакан фильм ӳкерессипе ĕçсем пыраççĕ. Предприятисемпе организацисен тата учрежденисен ĕç-хĕлне çутатассипе сюжетсем ӳкерессипе вĕçленсе пырать.

Йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕнче умри кашни ĕç çинчех тĕплĕ чарăнса тăчĕç. Çапла вара яваплă специалистсем Муркаш Ене халалланă кĕнеке кăларасси епле пынипе те паллашрĕç, сĕнӳсем пачĕç. Кунпа пĕрлех калаçу округ юбилейне халалланă сувенир продукцийĕ кăларасси пирки те пулчĕ. Кунта та кашни уйрăм сĕнĕве шута илчĕç.

Савăнăçлă лару-тăрура ĕç паттăрĕсене чысласси уявăн тĕп илемĕ пулĕ. Кунпа пĕрлех çав кун предприятисемпе организацисен тата территори пайĕсен экономикăпа социаллă аталанăвне те пĕтĕмлетĕç. Уяв выставкăпа та пуян пулĕ. Курма пыракансене художество пултарулăх ушкăнĕсем хăйсен савăк ташши-юррипе савăнтарĕç.

Ларăва вĕçленĕ май муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Алексей Матросов юпа уйăхĕ вĕçлениччен уяв иртерессипе çыхăннă пур ыйту çине те хурав тупма тата уява ăçта иртерессине уçăмлă палăртма хушрĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**

Çĕнĕлĕхсем

# Октябрĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕчĕç

***Çар комиссариатне пыманшăн штрафлассин виçи ӳсет, РФ гражданлăхне илессин тата унран хăтарассин çĕнĕ условийĕсем, çар пенсионерĕсен пенсийĕсене тата çар çыннисене паракан тӳлевсене индексацилесси т. ыт. те. ТАСС РФ Патшалăх Думипе пĕрле 2023 çулхи октябрьте пурнăçа кĕрекен пĕлтерĕшлĕ саккунсемпе правилăсем пирки каласа параççĕ.***

**Çар çыннисен тата патшалăх органĕсен ĕçченĕсен ĕç укçи ӳсет**

Çар çыннисен тата право сыхлавĕн хăш-пĕр органĕсен тӳлевĕсене 10,5 процент ӳстереççĕ. Федераци патшалăх органĕсен ĕçченĕсен, анчах та патшалăх служащийĕсем шутланманнисен (сăмахран, кассирсен, комендантсен тата экспедиторсен) тӳлевĕсене 5,5 процент ӳстереççĕ. Кунпа пĕрлех çар пенсионерĕсем 10,5 процент ӳстернĕ пенси илсе тăма тытăнаççĕ.

**Çар учечĕпе çыхăннă штрафсем**

Шута илмелли сăлтавсăрах повесткăпа çар комиссариатне пыманшăн тӳлемелли штрафа 30 пин тенкĕне çитереççĕ (унччен 500 тенкĕрен тытăнса 3 пин тенкĕ таран пулнă). Кунсăр пуçне енчен те гражданин хăйĕн даннăйĕсем улшăнни пирки (çемье, вĕренӳ, ĕç тĕлĕшĕнчи улшăнусем, урăх вырăна пурăнма кусни) çар комиссариатне пĕлтермен пулсан, унран 5 пин тенкĕ таран шыраса илме пултараççĕ.

**РФ гражданлăхĕ пирки çĕнĕ саккун**

Çынсен 20 категорийĕ тĕлĕшпе Раççей гражданинĕ пулма май паракан требованисен шучĕ чакать. Сăмахран, çакă унччен пĕр çĕршывра çуралнă ентешсене пырсa тивет (сăмах патшалăх программине хутшăнакан СССР граждансем тата вĕсен ачисем пирки пырать). Ют çĕршыв çыннисем те ансат майпа Раççей гражданлăхне илме пултараççĕ. Кун пеккисен РФ Хĕç-пăшаллă вăйĕсенче пĕр çулталăкран кая мар çар службинче пулма контракт тумалла пулать. Кунсăр пуçне РФ гражданлăхĕнчен хăтармалли преступленисен спискне ӳстернĕ. Вĕсен шутĕнче дезертирство, РФ Хĕç-пăшаллă вăйĕсене дискредитацилени тата экстремизма йыхравлани те пур.

**Патшалăх услугисенчи икĕ факторлă обязательнăй аутентификаци**

Октябрьтен Патшалăх услугисенчи икĕ факторлă аутентификаци обязательнăй шутланать. Парольсăр пуçне татах тепĕр çирĕплетӳ ыйтаççĕ, сăмахран, СМС-па ярса паракан код.

**Интернетри сĕнӳсен уçăмлă механизмĕ**

Сĕнӳ технологийĕсемпе усă куракан интернет-ресурссем хăйсем подписчиксем пирки пухакан сведенисен пĕтĕм спискне тата хăйсен сĕнĕвĕсен механикине уçса пама тивĕç пулаççĕ. Алгоритмсемпе усă курассипе хăйсен тивĕçне йĕркеллĕ пурнăçламан ресурссене Роскомнадзорăн хупма право пур. Саккун харпăр хăйĕн даннăйĕсемпе саккунсăр майпа усă курассинчен хӳтĕлеме тата фейксемпе кĕрешме пулăшма тивĕç.

**Банк карттисен сыхлăхĕ**

Октябрĕн 1-мĕшĕнчен банк карттисен ирĕклĕ страхованийĕн полисĕсем картта çухаласран е юрăхсăра тухасран çеç сыхламаççĕ, çавăн пекех ку шута ытти функцисем те кĕме пуçлаççĕ. Вĕсен шутĕнче – ултавçăсем картта çинчи укçана вăрлани те.

**Ипотека кредичĕ парассин йĕрки çирĕпленет**

Раççей банкĕ заемщиксемпе банксен ответлăхне ӳстерес тĕллевпе 2023 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ипотека кредичĕсем енĕпе яваплăх коэффициенчĕн хушăмĕсене (надбавки) ӳстерет. Хушăмсем ытларах малтанхи взнос пĕчĕк займсем валли тата куçман пурлăха пая кĕнин килĕшĕвĕпе пурăнмалли çурт-йĕр туянакансем валли ӳсеççĕ.

**Гараж пĕрлешӳĕсем пирки калакан саккун**

Гаражсем мĕнле объект пулнине палăртассипе тата вĕсене патшалăх регистрацийĕ тăвассипе пĕрлехи йĕрке пулать. Çакăн пек ăнлавсем пулаççĕ: «территория гаражного назначения», «гараж» тата «гаражный комплекс». Гараж комплексĕнчи пĕрлехи пурлăх переченьне палăртаççĕ тата унпа усă курассин ыйтăвĕсене йĕркелеççĕ.

**Нотариус услугисемшĕн тӳлессин системи улшăнать**

Нотариус ĕçĕсен пĕрлехи тариф пулать. Вăл икĕ пайран тăрать: федераци тата регион пайĕсенчен. Федераци пайĕ вăл – патшалăх пошлинин аналогĕ. Регион тарифне экономика тĕлĕшĕнчен сăлтавланă формулăна шута илсе кашни субъект валли уйрăм палăртаççĕ. Çакă нотариус услугисен хакне шайлашуллăрах тума, чылай услуга хакне чакарма май парать.

**Пĕрле усă куракан пурлăх**

Харпăрçăсен пĕрлехи куçман пурлăхĕ пирки калакан положенисене РФ Граждан кодексĕн ятарлă параграфĕнче уçăмлатнă. Унта пĕтĕмĕшле принципсене кăтартнă. Сăмахран, пĕрлехи пурлăх правинчи пай çав куçман пурлăхăн лаптăкĕпе пропорциллĕ шутланать. Çав принциппах кашни харпăрçă пĕрлехи пурлăха тытса тăма каякан расхутсене те саплаштарать.

**Ирĕксĕрлесе ĕçлеттерме – предприниматель патне**

Айăпласа ирĕксĕрлесе ĕçлеттерме йышăннисене малашне организацисем кăна мар, çавăн пекех уйрăм предпринимательсем те йышăнма пултараççĕ. Ку тĕлĕшпе предпринимательсен прависемпе тивĕçĕсем организацисен пекех пулаççĕ.

**Ӳсен-тăран тĕнчин уйрăмах хаклă объекчĕсене сыхласси**

Октябрĕн 12-мĕшĕнчен тытăнса Хĕрлĕ кĕнекене кĕртнĕ уйрăмах хаклă шутланакан ӳсен-тăранпа тата кăмпасемпе контрабанда тунăшăн, вĕсене пĕтернĕшĕн е сиенленĕшĕн, саккунсăр майпа пухнăшăн, сутнăшăн уголовлă яваплăх пулать. Сăмахран, массăллă информаци хатĕрĕсемпе усă курса е интернет урлă туяннăшăн е сутнăшăн 1,5 млн тенкĕ таран штрафлама е пилĕк çул таран ирĕкрен хăтарма пултарĕç.

**Кредит килĕшĕвĕнчи страховка хакĕ**

Страховани услугисен тата страховани премийĕн тулли хакне кредит килĕшĕвĕнче кăтартма тивĕç. Çакă граждансене кредит хакĕ пирки тулли информаци илме тата страховщика суйласа илессипе тĕрĕс йышăну тума пулăшĕ.

**Тимĕр-тăмăр панăшăн наличкăпа тӳлемĕç**

Октябрĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕнĕ саккунпа килĕшуллĕн граждансене тимĕр-тăмăр панăшăн алăран укçан тӳлеме юрамасть. Уйрăм çыннсенчен тимĕр-тăмăр, тĕслĕ металл юлашкийĕсене йышăннă чухне наличнăй мар расчет формипе усă курма тивĕç. РФ Федераци Канашĕн сайтĕнче пĕлтернĕ тăрăх, асăннă çĕнĕлĕх тимĕр-тăмăр тата металл юлашкийĕсене пухса тирпейлессине уçăрах тума, наличнăй укçатенкĕн саккунсăр çаврăнăшне чакарма май парĕ.

Юпа уйăхĕн 8-мĕшĕ – Ял хуçалăхĕпе продукци тирпейлекен промышленноç ĕçченĕн кунĕ

# Тăрăшуллă механизатор

Механизатор ĕçĕ-хĕлĕ паянхи ялшăн, çĕр ĕçченĕшĕн – чи йывăр та пĕлтерĕшли. Унăн ĕçĕнчи комфортлăх пирки вара калаçма та кирлĕ мар. Йăлтах техника хуçин аллинче. Анчах, шутласа пăхсан, çакăр ӳстерничен пахарах ĕç пур-и тата? Çав вăхăтрах çĕр-аннемĕр хăйĕн саккунĕсемпе пурăнать. Вăл кирек епле чĕрĕ чун пекех сывлать, чирлет, шыв çитменнипе аптăрать, çĕр хуçи пăхмасан çум айне пулать. Ытти чĕрĕ чунăнни пекех унăн та хăйĕн характерĕ пур. Çĕр ĕçченĕн тĕллевĕ – çав характера уçасси, унăн вăртăнлăхне пĕлесси. Ăна ăнăçлă пурнăçлама ăна пысăк чăтăмлăх, тарăн пĕлӳ, пуян опыт, ăсталăх, тĕллевлĕ тăрăшни кирлĕ.

Паянхи **сăн ӳкерчĕкре** эсир районти паллă механизатора, пурнăçне çĕр ĕçне халалланă уй-хир ĕçченне Радонеж Кузнецова куратăр. Çывăхарах паллашсан, ăна чăн-чăн çĕр хуçи тесе çирĕплетни тĕрĕс пулать. Çавăнпах пулĕ ăна Турай территори пайĕнчи Анаткассинче пурăнакансем те, Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн ĕçченĕсем те, Муркаш муниципалитет округĕн ертӳçисем те, республикăран килекен хăнасем те хисеплесе Радонеж Виссарионович тесе чĕнеççĕ. Пурте вĕсем унпа кăмăллăн калаçаççĕ, унпа канашлаççĕ, унăн сĕнĕвĕсене итлеççĕ, пуян опытне алла илме тăрăшаççĕ, унăн ĕçне тĕслĕхе илсе çамрăксене яла тата çĕр ĕçне юратма вĕрентеççĕ. Çаксем хыçĕнче механизатор тăван çĕре, çуралса ӳснĕ яла, хăй ĕçлекен хуçалăха чĕререн юратни тăрать.

– Унпа çул çинче тĕл пулсан та, машинăпа трактор паркĕнчи сак çине ларса е кану пӳлĕмне кĕрсе сăмах хускатсан та яланах калаçма çăмăл. Пур ыйту çине те вăл хăйĕн куçĕпе пăхать, кашнине уйрăм хак парать. Радонеж Виссарионович нихăш отрасле пăхмасăрах калаçăва тивĕçлĕ шайра тытса пыма, пĕрле калаçакана хисеплеме пĕлет. Çапла вара эпир унпа час-часах уй-хир ĕçĕсене тишкеретпĕр, умри ĕçсене планлатпăр, çĕнĕ техника туянассине, унпа ĕçлессине, ĕçсем вĕçленсен ăна управа лартассине, механизаторсем хатĕрлессине сӳтсе яватпăр. Час-часах ял çыннин килти хушма хуçалăхне аталантарасси пирки те калаçатпăр. Кашни калаçмассерен унран çĕнĕ ăс илсе, малашлăх ĕмĕтсене тата вĕсене пурнăçа кĕртмелли çул-йĕре палăртса уйрăлатăп. Кун пек чухне хама çĕнĕ вăй кĕнĕн туятăп, ялсен тата пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн малашлăхĕ пирки шутлама пуçлатăп, – терĕ Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн председателĕ Алексей Воробьев. Çак вăхăтра Алексей Валентиновича машинăпа трактор паркĕнче шăпах аксакал механизаторпа юнашар тĕл пултăм.



Çĕр ĕçне тата ял хуçалăх техникине чунĕпе парăннă Радонеж Виссарионович çĕр ĕçĕнче мĕн ачаранпах. «Çĕр çинче ĕçлесси килти хушма хуçалăхран пуçланчĕ. Пĕррехинче анне тăван хуçалăх хирне ĕçе васканă чухне мана, вунă çулхи ачана, хăй ĕçрен таврăнинчен хăяр акма йăран хатĕрлеме хушрĕ. Атте-аннене итлеме хăнăхнăран хирĕçлемерĕм. Урама юлташсемпе выляма тухмасăр тислĕк хыврăм, кĕреçе илсе çĕр пусрăм, кĕреплепе тураса якатрăм. Хушнă ĕçе анне киличчен вĕçлерĕм. Питĕ ывăннине те астăватăп, анчах анне манăн ĕçе йышăнсан тантăшсемпе чун килениччен вылярăм», – терĕ вăл мана хăйĕн пĕрремĕш механизатор-наставникĕпе паллаштарса. Ывăлĕпе «хурçă утпа» ĕçлемелли пĕрремĕш уроксене ашшĕ иртнерĕ. Виссарион Кириллович вăл вăхăтра хуçалăхра малтанхи тата ăста механизаторсенчен пĕри пулнă.

– Аттене трактор юсама пулăшма çӳренĕ чух вăл вĕрентнинчен çакна ăша хывса хăвартăм. Çĕр ĕçченĕн çăкăр çинчен шутласа хресчен пурнăçĕпе пурăнмалла. Çапла вара çĕр ĕç культурине лайăхлатма, уй-хирпе улăх-çаран пулăхлăхне ӳстерме, çамрăксене çĕр ĕçне юратма вĕрентме тăрăшмалла, – терĕ ашшĕне ыррă туса калаçнă май кăçалхи вырмана хутшăннă çĕнĕ «Акрос – 585» комбайн тавра çаврăнса Радонеж Виссарионович. Ку «хир карапĕпе» 70 çулхи механизатор кăçал 1755 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ. Кăтарту хуçалăхра та, округра та малтисен йышĕнче.

Манăн пĕлĕшĕм 4 ачаллă хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ: çемьере иккĕмĕш пулнă, ывăлсенчен – асли. Ачаран ашшĕпе юнашар пулма тăрăшнăскер, ӳсерехпе комбайнер пулăшаканĕ пулса тырă пуссине тухнă. Наставник-ашшĕ пулăшнипе 16 çултах кĕрхи тулă пуссипе «хир карапне» хăй аллипе тытса уттарнă. Çав çултан пуçласа вăл тăтăшах хăй ялта пулнă чух вырмана хутшăннă. Кăçалхи вырма уншăн 36-мĕш экзамен пулчĕ.

Шкул хыççăн Анаткасси каччи Советскинчи 4-мĕш СПТУра водитель-механизатора вĕреннĕ. Çулсем иртнĕ май паянхи опытлă механизатор, халăхра калашле, йывăç та лартнă, пурăнмалли çурт та тунă, мăшăрĕпе – Любовь Зиновьевнăпа – икĕ ывăлпа хĕр çуратса ӳстернĕ, ялта ятлă çын пулса тăнă. Паян хăйсен 5 мăнукне хăйне евĕр пурнăç илемĕ тесе паллаштарчĕ ĕç ветеранĕ.

Çиччĕмĕш теçеткепе пыракан арçын ку тĕле çитсен калаçура салтак пурнăçне те айккинче хăвармарĕ. 1972 – 1974 çулсенче паянхи ветеран Инçет хĕвелтухăçĕнче авиаци çар чаçĕнче водитель пулса службăра тăнă. Çарта водитель пулни киле таврăнсан та кирлĕ пулнă.

Служба тивĕçне пурнăçласа яла таврăннă ĕçрен ӳркенмен каччăна Суворов яч. хис. хуçалăх ертӳçисем çийĕнчех кивĕ СК-4 «Нива» комбайна вырмана хатĕрлеме ыйтаççĕ. «Хир карапĕнчен» катара тăман каччă çанă тавăрсах ĕçе кӳлĕнет. Çамрăк механизатор ума лартнă тĕллеве пурнăçлать, «хир карапне» вăхăтра кĕртри пуссине кăларать. Çав çул вăл талăксерен 40-шер тонна тырă вырни пысăк кăтарту пулнă. Çак маркăна вăл 36-мĕш çул ĕнтĕ алăран вĕçертмест.

– Комбайнпа ĕçлемен вăхăтра ăçта вăй хуни те интереслĕ, – тăсатăп хамăр калаçăва. Механизаторăн кунта та хуравĕ хатĕр:

– Атте-аннерен эпĕ алă усса ларма хăнăхса ӳсмен. Вырма тапхăрĕ çитмен е иртнĕ вăхăтсенче çулленех тиев турттаракан автомашинăпа ĕçлеттĕм. Çур акире тата кĕр акире сĕрмелли-çунтармалли материал турттараттăм. Сенажпа утă çинче – ешĕл массăпа типĕ утă. Хĕлле ял çыннисем валли вутă патне çӳреттĕм. Куллен ĕçе тухма çăмăл марччĕ пулин те, хуçалăх ертӳçисен, ял çыннисен шанчăкне тӳрре кăларсах пытăм, – васкамасăр хуравларĕ вăл.

Ĕçре, çул çинче «хир карапĕ» те, автомашина-трактор ванни те пулать. Кун пек чухне Радонеж Виссарионович çын пулăшасса кĕтмен, хăех юсав ирттернĕ, техникăна малалла ĕçлеттернĕ. Ĕç ĕмĕрĕнче унăн тĕрлĕ техникăпа вăй хума тивнĕ: «хурçă утпа» та, тĕрлĕ автомашинăпа та, «хир карапĕпе» те. Анчах ĕç ветеранĕ техника хăйне «улталанине» астумасть. Мĕншĕн тесен ирлесе яланах техникăна та, ĕç агрегачĕсене те çирĕп тĕрĕсленĕ, çийĕнчех юсанă-улăштарнă, техникăна тирпейлĕ упранă. Кăçсерен киле сĕрмелли-çунтармалли материалпа тата тусанпа вараланса таврăннă пулсан та, çĕр ĕçне хула пурнăçĕпе улăштарма шутламан вăл.

Ĕçре ырăпа палăракан механизатора тата водителе хуçалăх ертӳçисем те, пĕрле ĕçлекенсем те яланах шаннă. Çапла вара ĕçе йĕркелеме пултаракан арçынна тĕрлĕ çулсенче Суворов яч. хис. пĕрлешӳллĕ кооперативăн автомеханикĕнче, кооперативăн тĕп инженерĕнче курма май пулнă.

Тивĕçлĕ канăва тухсан та вăл тăван хуçалăхри çĕр ĕçĕнчен пăрăнман. Нумай хушă саппас пайĕсен, строительство материалĕсен, сĕрмелли-çунтармалли материалсен склачĕсен заведующийĕ пулнă. Пур çĕрте те хăйне тирпейлĕ тытнипе ыттисемшĕн ялан тĕслĕх пулнă.

Тăрăшуллă ĕçне кура Радонеж Виссарионовича пĕрре мар ведомство наградисемпе, хуçалăхăн тата округăн Хисеп грамотисемпе, хаклă парнесемпе чысланă. 2000 çултанпа вăл – «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ механизаторĕ».

Ĕçленине кура – ырă ячĕ. Çапла вĕçлетĕп эпĕ хамăн паянхи калаçăва.

**Анатолий БЕЛОВ.**

# Уй-хир ĕçĕнчен пăрăнса тăман

Кирек кам та хăйĕн ĕмĕрĕнче пурнăç илемне курма пултарсан кун-çулне телейлĕ теме пултарать. Оринин территори пайĕнчи Сентимĕр ялĕнче хресчен çемйинче 1930 çулта çуралнă, çемье йăвине Кашмашра çавăрнă, пĕтĕм ĕç ĕмĕрне «Свобода» хуçалăхăн уй-хир бригадинче иртнернĕ Лариса Петрова **(сăн ӳкерчĕкре)** кĕçĕн хĕрĕпе Ренăпа калаçнă хушăра ман çине ăшă кулăпа пăхса хăй телейлине çирĕплетрĕ.

– Паян хăш-пĕр çынсем пурнăçа тиркенине илтетĕп те тĕлĕнетĕп. Пӳрт ăшĕнче вутă патне вăрмана утмалла мар, тыррине çурлапа вырмастпăр, кашни пӳлĕмре электричество хунарĕ çунать, кунĕпе паха телевизор пăхатпăр, хăвăрт пăсăлакан продукта холодильникра упратпăр. Урамра асфальт, урана çăпата сырмалла мар, харпăр хăйĕн çăмăл автомашинипе е автобуспа çитес çĕре те хăвăртах çитме пулать, патшалăх пенси парать – тата мĕн кирлĕ? – тинкерчĕ ман çине Лариса Арсентьевна хăй мĕнле пурăннипе кăсăкланса.

Ашшĕ ир вилнĕрен пиччĕшĕпе вăл амăшĕ хыçĕнче юлнă. Колхозсем тунă вăхăтра амăшĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăх ĕçĕнчен пĕр кун та юлман. Çавăнпа та кун каç енне сулăнсан пиччĕшĕпе иккĕшĕ анне хăçан килет-ши тесе макăрни паян та кукамай асĕнчех.

– Пире аннесем 11 çултах тырă вырма илсе тухатчĕç. Вĕсем çурлапа ĕçлетчĕç. Çĕмелсем туса хăваратчĕç те эпир вĕсене пĕр çĕре пухаттăмăр. Пĕррехинче аннесем канма ларсан ялтан вăрçă тухнă текен хыпар çитрĕ. Вăрçă мĕнне эпир ун чухне пĕлмен, анчах хĕрарăмсем макăрма пуçлани асрах. Кĕçех ялти арçынсене фронта илсе кайма пуçларĕç. Салтак арăмĕсем, ачисем йĕни ял урамĕпе инçете илтĕнетчĕ. Манăн аттен пиччĕшĕпе шăллĕ те – Порфирийпе Сантăр – вăрçă хирне тухса кайрĕç. Каялла таврăнаймарĕç вĕсем. Вăрçă пуçлансанах Сентимĕре беженецсем çитрĕç. Вĕсене пирĕн пӳрте те вырнаçтарчĕç. Хамăр вара верандăра пурăнтăмăр. Нумай пурăнмарĕç вĕсем, анчах вĕсен çăмăл мар пулнă пурнăçне паян та ăнланатăп, – аса илчĕ 93 çулпа пыракан кукамай.



Калаçура 13 – 14 çулхи ачасене Çĕмĕрлене вăрман касма илсе кайни те çиеле тухрĕ. «Арçынсем çук, хĕрарăмсем колхоз ĕçĕнче пулнăран вăрман касма пире илсе каятчĕç. Пĕррехинче юман айне пултăм, суккăрлантăм. Юрать сывалтăм. Ӳсерехпе Шупашкара лашапа тырă леçме çӳрени те асрах. Пире, ачасене, çăмăлрах пултăр тесе аслисем сĕлĕ миххисем тиесе паратчĕç», – аса илчĕ вăрçă ачи.

Вăрçă чарăнсан та йывăрлăхсем тăруках иртмен. Ялта арçын вăйĕ çукран хĕрсемпе çул çитмен каччăсенех фермăра ĕçлеме, торф кăларма çӳреме тивнĕ. Лариса та вĕсенчен юлман. Малтанах 3 çул ĕне фермине сĕт сурĕ вăл. Унăн ушкăнĕнче 10 ĕне те пĕр вăкăрччĕ. Хĕр вĕсене тăрантаратчĕ, шăваратчĕ, ĕнесене сăватчĕ. Бидонсене тултарнă сĕте леçме Шурчана вăкăрпа каятчĕ. Кайран тепĕр 3 çул вăл Атапай улăхĕнче торф кăларнă çĕре хутшăнчĕ. Кашмаш çамрăкĕсем те пыратчĕç унта. Тирпейлĕ ĕçлекен Ларисăна Кашмашри Микула килĕштернĕ пулас. Çапла вара ним калаçмасăр-çӳремесĕрех вăл Ларисăн амăшĕ патне евчĕ ярать.

29 çулхи Микулапа 27 çулхи Лариса 1956 çулта çемье çавăраççĕ. Çак кунран пуçласа Лариса Арсентьевна хăйĕн ĕç ĕмĕрне «Свобода» хуçалăхăн 1-мĕш уй-хир бригадинче тăсать. Туслăхпа юрату никĕсĕнче вĕсен 4 хĕр çуралать. Асли ачаллах вилнĕ пулсан та, Гальăпа Света тата Рена пурнăç çулĕ çине тухаççĕ, амăшĕшĕн пысăк тĕкĕ пулса тăраççĕ. Мăшăрĕсĕр ир юлнă çĕр ĕçченĕ хĕрĕсем пурнăçра хăйсен вырăнне тупчăр тесе вĕсене ачаллах ĕçпе туслаштарнă. Çапла вара вĕсем ачасем хутшăнма пултарнă пур ĕçе те явçăннă: çĕр улми суйланă, утă çулнă тата типĕтсе кĕртнĕ, улăм пуçтарнă, арпа турттарнă, йĕтем çинче ĕçленĕ т. ыт. те. Кунпа пĕрлех шкулта та ăпăх вĕренмен. Шкул хыççăн амăшĕн ĕмĕтне пурнăçласа пурте ятарлă вăтам пĕлӳ е аслă пĕлӳ илес çул çине тăнă. Лариса Арсентьевнăн аслă хĕрĕ Галина И. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн физикăпа математика факультетĕнчен вĕренсе тухнă, Света Шупашкарти планпа экономика техникумне вĕренсе пĕтернĕ, Рена ашшĕн çулне суйласа Шупашкарти çыхăну электротехникумĕн дипломне алла илнĕ. Ку тĕле çитсен Рената Николаевна ашшĕ яла электричество çути кĕртессипе, Муркашри подстанцире епле ĕçленипе кĕскен паллаштарчĕ. «Атте йывăрлăхран хăрамастчĕ. Пире те çак çулпа утма вĕрентетчĕ. Вăл хăйĕн юлташĕсемпе Кашмаша электричество çути кĕртни халĕ те асра. Урам тăрăх йывăç тункатасем лартатчĕç. Пĕр-пĕрне хӳтĕлесе-сыхласа алюмини пралуксен çыххине çурăм çине çакса тункатасем çине улăхатчĕç», – ăшшăн аса илчĕ вăл.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхра ĕçленипе пĕрлех Лариса Арсентьевна килти хушма хуçалăх пирки те самантлăха та манман. Вăл хăй 80 çул тултариччен килти хушма хуçалăхра ĕне тытнă. Харпăрлăхра сыснасем те, пăрăвĕ-вăкăрĕ те, хурĕсем те, ытти чăх-чĕп те пулнă. Туслă çемьен сад-пахчи те пĕчĕккĕ пулман. Килти хушма хуçалăха тытса пыма ăна хĕрĕсен çемйисем пулăшсах тăнă. «Вĕсем çумра пулни 93 çула çитме пулăшрĕ те ĕнтĕ мана», – терĕ кукамай кĕçĕн хĕрĕ çине ăшă кулăпа пăхса.

Хăйĕн пурнăçĕнче çĕр ĕçĕнчен уйрăлмасăр тăрăшнă хĕрарăм ачисене мĕн пĕчĕкрен хутла вĕрентессишĕн тăрăшнă. Аслă Çĕнтерĕвĕн юбилей медалĕсемпе пĕрлех ĕç тиркесе тăман хĕрарăм «Ĕç ветеранĕ» медале тивĕçнĕ. Хĕрĕсем пурнăçра тивĕçлĕ пĕлӳ илнишĕн Лариса Арсентьевна юнашар ларакан Рена хĕрĕ çине кăмăллăн пăхса илчĕ. Амăшĕн куçĕнче ачисемшĕн савăнăç палăрчĕ. «Тăвата мăнукпа пĕр кĕçĕн мăнук та пурнăçра ĕçрен юташăнмасса шанатăп. Ĕçлекен çын çеç тулли пурнăç тăвайрать», – терĕ хамăр калаçăва вĕçлесе вăрçă ачи, ача амăшĕ, кукамай тата ĕç ветеранĕ.

Лариса Арсентьевнăпа юнашар – паян хăй çуратса ӳстернĕ хĕрĕсен çемйисем. Вĕсем ăна пĕрле пулса килти хушма хуçалăха тытса пыма пулăшаççĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш çĕрĕн мухтавĕ»**

# «Ачасем компьютерпа туслишĕн савăнатăп»



Ялти учителĕн пĕлтерĕшĕ пысăк. Хăвăрт улшăнакан пурнăçра вăл туса ирттерекен ĕçе пĕр енлĕ хаклама çук. Унăн ĕçне ялсен малашлăхĕпе, çамрăк ăрăвăн пуласлăхĕпе çыхăнтарни тĕрĕсрех. Мĕншĕн тесен паян шкулта ăс пухакансем çĕнĕ технологисем вăй илсе пыракан пурнăçра ĕçлесе пурăнма хатĕрленеççĕ. Çавăнпа та ял малашлăхне шанакан учителĕн хăйĕн ĕçĕнче йăнăшма ирĕк çук. Ахальлĕн кашни пĕчĕк калтăк вуншар ача вĕренĕвĕпе пысăк калăпăша пухăнма пултарать. Ун хыçĕнче вара тăван ялпа хамăр юратнă округ малашлăхĕ, пурне те пĕтĕçтерекен республика тата Раççей аталанăвĕ тăрать. Çавăнпа та таса чунлă, ырă шанчăклă, çутă ĕмĕтлĕ, нумай пĕлме тăрăшакан ачасене çителĕклĕ те тарăн пĕлӳ илсе пурнăç çулĕпе çирĕппĕн утма вĕрентесси – 21 ĕмĕрти вĕрентекенĕн тĕп тĕллевĕ. Çакăн пек пĕтĕмĕшле хурав пачĕ 30 çул Муркашри вăтам шкулта ĕçлекен Олег Волков (**сăн ӳкерчĕкре**) учителĕн паянхи обществăри вырăнĕ пирки сăмах хускатсан. Чей ĕçсе ларнă хушăри туслă калаçу вара пирĕн вăрăма тăсăлчĕ. Атте-аннесен пурнăçне, вĕрентекенсен çăмăл мар ĕçне, шкул ачисен тĕллевĕсене сӳтсе яврăмăр.

**Атте нумай пĕлетчĕ**

Муниципалитет округĕнчи шкулсенче ачасене информатика предметне вĕрентекенсен пĕрлешĕвĕн ертӳçи, аслă категориллĕ учитель Олег Константинович хамăр калаçăва ашшĕ-амăшĕнчен пуçларĕ.

– Пурнăçра пурте космонавт е Президент пулаймаççĕ. Анчах кашни çыннăн хăйĕн пурнăç тилхепине тытма пĕлмелле, харпăр хăйĕн ĕçĕпе ыттисемшĕн тĕслĕх пулмалла. Манăн аттепе анне – Константин Филиповичпа Римма Федоровна – çавăн пеккисен йышĕнчеччĕ. Аслă пĕлӳллĕ специалистсем пулман пулсан та, çулсем иртнĕ май эпĕ вĕсене çамрăк ăрăвăн чăн-чăн наставникĕсем тесе хаклатăп. Вĕсем пире хăйсен тĕслĕхĕпе туслă пурăнма вĕрентнĕ, тивĕçлĕ пĕлӳ илме пулăшнă, канаш пама пĕлнĕ, кирлĕ сĕнĕве те вăхăтра панă. Çур ĕмĕр ытла пурнăçăмра çаксем йăлтах вырăнлă пулнине халĕ хам куçпа куратăп. Атте ĕмĕрĕпех Муркашри «Сельхозтехника» пĕрлешӳ водителĕнче ĕçлерĕ. «25 лет без аварии» медаль илни те вăл мĕнле ĕçленине палăртать пулĕ. Хăйĕнчен çамрăк водительсене вăл пĕр турткаланмасăр пулăшни, çемьешĕн ялан çирĕп тĕкĕ пулни тата ялан нумай пĕлме тăрăшни паян та куç умĕнче. Унăн кирек епле ĕç пирки те, техника юсассипе те усăллă сĕнӳ çителĕклĕччĕ. Вăл нумай пĕлнинчен эпир тĕлĕнеттĕмĕр, ун пек пулма ĕмĕтленеттĕмĕр. Анне те Муркаш райповĕн сутуçинче ĕçленĕ май чылай çынна паллатчĕ, вĕсем пирки пире ыррине кăна каласа паратчĕ. Çапла вара нумай пĕлме тăрăшасси, ыттисене пулăшасси, çынна ырă çеç сунасси пирĕн ăшра ачаллах йăва çаврĕçĕ. Марина йăмăкăмпа иксĕмĕр çакăн пек туслă çемьере çитĕннине паян Турă пулăшăвĕ тесе хаклатăп, – пуçларĕ хамăр калаçăва манăн пĕлĕшĕм.

Вăхăт хăйĕн уттипе пырать. Çапла вара çул çитсен Олег Муркашри вăтам шкулта пĕлӳ пухма пуçлать. Класра ачасем нумайччĕ, пуçлăхсен çемйинчисем те пурччĕ. Анчах арçын ача хăйне ыттисенчен катăк тытмарĕ. Пĕрремĕш класранах пĕлӳ çулĕпе çирĕппĕн утрĕ. Çапах ытти предметсенчен математикăпа физикăна тата вырăс чĕлхипе литературине, чăваш чĕлхипе литературине тĕплĕнрех вĕренме тăрăшрĕ. «Пурнăçра хăвăн çулна тупас тесен тăрăшса вĕренмелле, учительсене итлемелле, вĕсем каланине вăхăтра пурнăçламалла», – тенĕччĕ ăна пĕрремĕш класа ăсатнă чух ашшĕ. Çак сăмахсем уншăн шкулти ăнăçлă вĕренĕвĕн уççи пулчĕç. Ашшĕ-амăшĕн сăмахĕнчен иртмен арçын ача кашни урока тĕплĕ хатĕрленсе каятчĕ, библиотекăпа туслă çыхăну тытатчĕ, аслă юлташĕсен ăнăçу никĕсне те тишкерсех пыратчĕ. Çакă ăна вĕренӳре туллин ĕлкĕрсе пыма пулăшрĕ.

**Компьютер**

Çул хыççăн çул историе çырăннă май пурнăç улшăнсах пырать. Кунпа пĕрлех çамрăк ăрăвăн аталанăвĕ те пĕр вырăнта тăмасть. Тĕслĕх вырăнне Олег Константинович компьютер пирки сăмах хускатрĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче шкулта компьютер сăмах та пулман. Вăл мĕнлереххине тата унпа епле ĕçлемеллине шкул ачисем пĕлме те пултарайман. «Юмахчĕ ун чухне вăл пирĕншĕн. Тепĕр 10 – 15 çултан çак ăслă техника пире тыткăнлассине те никам ĕненмен. Анчах пурнăçри чăнлăх урăхла килсе тухрĕ», – каларĕ вĕрентекен.

– Пурнăç çапла улшăнасса ĕненмен пулсан та вăтам шкул хыççăн Чăваш патшалăх университечĕн физикăпа математика факультетĕнче ăс пухма епле шутларăн? Такам каланипе суйларăн-и çак çула? – кăсăкланатăп педагогран.

– Шкул хыççăнах хама ĕçре тĕрĕслерĕм. Кайран вара хатĕрленӳ курсĕ урлă аснăнă вĕренӳ заведенийĕн физмат факультетне вĕренме кĕтĕм. Компьютер мана çакăнта хăваласа çитрĕ. Факультетăн юлашки курсĕсенче пире компьютерпа паллаштаракан занятисем пулчĕç. Мана ку çĕнĕлĕх килĕшрĕ, интереслентерчĕ. Пĕрешкел шутлакан студентсемпе хушма занятисене çӳрерĕмĕр. Шалти туйăм ун чухнех ку çĕнĕлĕх малашлăхпа çыхăннине систеретчĕ, йăнăшмарăм, – пулчĕ хурав.

1993 çулта аслă пĕлӳ илнĕ вĕрентекен Муркаша, тăван шкула, таврăнать. Ăна математика, экономика тата информатика учителĕ пулса ĕçлеме йышăнаççĕ. Шăпах çав çулсенче вĕренӳ заведенийĕсенче те, ĕç коллективĕсенче те компьютер технологийĕ аталанма пуçларĕ. Университетра чухнех компьютер еннелле утăмланă учитель çĕнĕлĕхе килĕштерсе йышăнать, программăсен чĕлхипе кăсăкланма пуçлать. Çав çулсенчех шкула робототехника вĕрентĕвĕ çитет. Ку çĕнĕлĕх те Олег Константиновича айккинче хăвармасть. Компьютер технологийĕнче малашлăх пуррине ăнланса çамрăк педагог Чăваш Республикин Вĕренӳ институтĕнче компьютер программисемпе ĕçлеме квалификаци ӳстермелли курса çырăнать. Çакăн хыççăн вăл Муркашри вăтам шкулта вĕренекенсене информатика предмечĕпе ăс пама пуçлать.

**Конкурс çĕнтерӳçисем**

Шкул ачисем те пурнăç кăларса тăратнă çĕнĕлĕхпе туллин кăсăкланма пуçлаççĕ. Çав çулсенче районта информатика предмечĕпе малтанхи конкурссем иртеççĕ. Çамрăк вĕрентекенĕн воспитанникĕсем те унта хутшăнса лайăх кăтартусем тăваççĕ. Çак вăхăтрах аснăнă конкурссем (каярах вăхăтра – олимпиадăсем) республикăра та вăй илеççĕ. Ку çĕнĕлĕх пуçарулла учителе хăйĕн предмечĕпе тĕллевлĕрех ĕçлеме хистет. Çитменнине 1998 çулта унăн вĕренекенĕ информатикăпа республика конкурсне хутшăнма право çĕнсе илет. Унта вăл япăх мар кăтарту туни учителе татах тĕкĕ парать. Çакăн хыççăн Муркашри вăтам шкулта компьютерпа ĕçлеме вĕрентесси хушма вăй илет.

Чĕрĕк ĕмĕр хушшинче Олег Константинович алли витĕр вуншар ача тухать. Вĕсем хушшинче 30 ача ытла республикăри олимпиадăсене хутшăнса çĕнтерӳçĕ е призер пулса тăнă.

– Ачасем олимпиадăсене хутшăнни лайăх-ха, анчах вĕсем хăйсен пурнăç çулне компьютер технологийĕсемпе çыхăнтарни мана ытларах савăнтарать. Манăн вĕренекенсем ку енĕпе аслă пĕлӳ илсе паян Раççейри тĕрлĕ хулара ĕçлеççĕ. Мускавра çеç пирĕн шкултан вĕренсе тухнă 20 ытла яшпа хĕр вăй хураççĕ. Вĕсемсĕр пуçне пирĕн выпускниксене Шупашкарти, Хусанти, Чул хулари, Санкт-Петербургри предприятисемпе организацисенче те курма пулать. Яла килсен вĕсем шкула кĕрсе тухни вара – маншăн чăн-чăн савăнăç, – паллаштарчĕ паянхи пурнăçпа информатика предмечĕ вĕрентекенсен округри пĕрлешĕвĕн ертӳçи. Ачасем информатика предметне юратнине вĕсем юлашки çулсенче унпа ЕГЭ суйласа илни те çирĕплетет. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче çеç 11 «б» класра вĕренекенсем пурте майлах çак предметпа ЕГЭ тытнă. Тĕрĕслев витĕр ăнăçлă тухнисем пурте аслă вĕренӳ учрежденийĕсене бюджет вырăнĕсене вĕренме кĕнĕ.

Олег Константинович çемьеллĕ. Унăн мăшăрĕ Лина Алексеевна Муркашри вăтам шкулта вырăс чĕлхипе литератури вĕрентет. Вĕсен икĕ хĕрĕ – Владăпа Викторя – ашшĕн çулĕпе кайса пурнăçра информатика технологийĕсене суйласа илнĕ. Иккĕшĕ те паян Чăваш патшалăх университетĕнче ăс пухаççĕ.

# Яланах ыттисемшĕн тĕслĕхре



Ялта пурăнаканăн, кирек ăçта ĕçлесен те, тĕп шухăшĕ килти хушма хуçалăх çинчех. Ылтăн кĕркунне çитнĕ май вăл паян çăвĕпе пахчара туса илнĕ çимĕçе вăхăтра тирпейлĕ пуçтарса кĕртесси, ăна тупăшлă вырнаçтарасси, пуян тухăçпа тĕллевлĕ усă курасси пирки шухăшлать.

Эсир паянхи сăн ӳкерчĕкре пурнăçра хăйĕн вырăнне тупнă, тӳрĕ кăмăллă, ĕçĕпе ял çыннисем хушшинче ырă ят çĕнсе илнĕ вĕрентекене тата ăшпиллĕ наставника, нумай ача амăшне, тăван округ ятне çӳле çĕклекене, республикăра ырăпа паларакан ĕçчене Надежда Ивановăна куратăр. Вăл 1962 çулта Апчар ялĕнче нумай ачаллă хресчен çемйинче çуралнă.

Çулсем иртнĕçемĕн хăш-пĕр çын час-часах сывлăх хавшани, чир-чĕр канăçсăрлантарни пирки сăмахлать пулсан, Тренккăра пурăнакан Надежда Лукинична вĕсен йышĕнчен мар. Пуян опытлă педагог пĕр ялта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе пурăнакапа та, уй-хирте тырă-пулă ӳстерекенпе те, трактор-машинăпа ĕçлекен механизатор-водительпе те, шкул хапхинчен вуншар çул маларах вĕренсе тухса пурнăçра пысăк ӳсĕм тунисемпе те, иртнĕ çул çеç шкул пĕтернĕ хыççăн институт-университета вĕренме кĕнĕ студентпа та, паян парта хушшинче ăс пухаканпа та пĕр чĕлхе тупса калаçма пултарать. «Манăн пурнăç шкулĕ çапла пулчĕ. Эпĕ яланах халăхпа пĕрле. Кунта вара пĕрне тиркесе теприне килĕштернине юратмăсăр – кашнинпех пĕр чĕлхе тупма пĕлмелле», – терĕ вăл хăйне ырă енчен палăртса сăмах хушнинчен аванмарланса.

Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа аслăраххисем те, шкул ачисем те Ильинкăри вăтам шкулта ăна ăшшăн тав туса чĕрĕ чечек çыххисем панине курма питĕ кăмăллă пулчĕ. Эпĕ ăна пĕрремĕш кун мар палланăран тата унăн учитель тата директор ĕçне çывăх курса тăнăран çак савăнăçлă самант ман çумран йĕр хăвармасăр иртмерĕ...

***Яла суйланă***

Тăватă ачаллă çемьере Надя кĕçĕнни пулнă. Ашшĕ пурнăçран ир уйрăлнăран ачисене ура çине тăратасси, пурнăç çулĕ çине кăларасси пĕтĕмпех амăшĕн хулпуççийĕ çине тиеннĕ. Ял çыннисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман хĕрарăмăн пĕтĕм шанчăкĕ ачисем çинче пулнă. Çавăнпа амăшĕ вĕсене ачаллах ĕçпе туслаштарнă, унăн вăрттăнлăхĕсене вĕрентнĕ. Çапла вара Надьăн та аслисен çурăме хыçĕнче пытанса ӳсме май килмен: ачаллах алла кĕрепле, сенĕк, кĕреçе, ӳсерехпе çава тытма тата кил хуçалăхри выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕке пăхма тивнĕ. Аслăраххисенчен юлмасăр вырмара ĕçлени те, çамрăклах тулли михĕсем йăтни те уншăн паян суя сăмах мар.

Ачалăха тишкернĕ май, çулсенчи хĕрарăмăн пĕчĕккĕ чухне урамри тантăшĕсемпе шкулла выляни нихăçан та манăçмасть. Инçетри çав çулсенче вăл яланах никам сĕнмесĕр учитель рольне хăй çине илетчĕ: тантăшĕсене çырма-вулама, шутлама, сăвă пăхмасăр калама, учитель каланине итлеме вĕрентетчĕ. Çак суйлавра ялти шкул ачисене вĕрентме килнĕ тата кӳршĕре хваттерте пурăнакан Шуршăл хĕрарăмĕпе хутшăннин витĕмĕ те пулнах-тăр.

...Кун хыççăн кун иртет, çул хыççăн çул. Пурнăçăн çак йĕркипе пырса хĕр ача сисмесĕрех шкул çулне çитет, Апчарти пуçламăш шкулта ăнăçлă вĕреннĕ хĕрне амăшĕ 3 çултан Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкула вĕренме ярать. Пуçарулă пулма хăнăхнăскер, çĕнĕ коллективра та часах хăйĕн вырăнне тупать вăл, пĕрле вĕренекенсем хушшинчи лидер пулса тăрать.

(Вĕçĕ 5-мĕш стр.)

«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш çĕрĕн мухтавĕ»

# Яланах ыттисемшĕн тĕслĕхре

(Вĕçĕ. Пуçл. 4-мĕш стр.)

«Атте пулманран çимелли-тăхăнмалли те питех марччĕ манăн. Ку çитменлĕхе эпĕ тăрăшса вĕреннипе саплаштарма шутларăм. Хамран каярах юлса вĕренекенсене пулăшасси те маншăн ялан тĕп вырăнтаччĕ. Çапла вара лайăх паллăсемпе вĕренсе вунăмĕш класа çитрĕм. Экзаменсене ăнăçлă тытса алла аттестат илтĕм», – аса илчĕ шкул çулĕсене Надежда Лукинична. Малалла вĕренес ĕмĕчĕ те пысăк пулнă. Анчах çемьере укçа-тенкĕрен кăртăнкă пулнăран 17 çулхи хĕр малтанах ĕç çулне суйласа илет: пĕр çул Шупашкарти резинăпа техника изделийĕсем кăларакан Чапаев ячĕллĕ заводра ĕç практики илет.

Заводра ĕçлесе те вĕренес ĕмĕт çухатмансер, çулталăкран И. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне пуçламăш классен вĕрентĕвĕн педагогикипе методики факультетне вĕренме кĕрет. Пĕрремĕш кунранах тăрăшса пĕлӳ пухма пуçланă хĕр стипенди илме те тивĕçет. Ку вара уншăн хушма тĕкĕ пулнă. Семестр хыççăн семестр лайăх паллăсемпе вĕçлесе 4 çул сисĕнмесĕрех иртсе каять.

**Чунĕ Муркашах туртнă**

Аслă пĕлӳ илнĕ çамрăк пикешĕн çĕнĕ пурнăç пуçланнă: вăл халĕ – чăн-чăн учитель. Институтра илнĕ пĕлĕве практикăра çирĕплетмелле. «З» паллă пулман дипломлă хĕре Шупашкарта хăварма та пултарнă, анчах ялта çуралса ӳснĕскер, унталлах туртăннă. Çапла вара Апчар хĕрĕ ĕç валеçĕвĕпе Юнкăри вăтам шкула лекет. Çав вăхăтра Ильинкăри вăтам шкулта та пуçламăш классене вĕрентекен васкаврълă кирлĕ пулса тухать те çиччĕ виçсе пăхнă хыççăн пуçлăхсем Надьăна тăван ене ĕçлеме куçараççĕ.

– Халăхра çапла калани пур: ăçта çуралнă – çавăнтах кирлĕ пулнă. Ку каларăша эпĕ хам çинченех каланă пулĕ тесе шутлатăп. Тăван енре ĕçлеме пуçларăм та çĕнĕ туссем тупрăм, кунтах çемье çавăртăм, тăвătă ача çуратса ӳстертĕм. Çак çула мана Турри хăй панă пулĕ тесе шутлатăп. Çавăнпа та ун тăрăх тикĕс утассине пĕрремĕш кунранах хам пурнăçăн никĕсĕ туса хутăм, – лăпкăн каласать 40-мĕш вĕренӳ çулĕ пуçланă Надежда Лукинична.

Кунта çитсен эпĕ хамăн пĕлĕшĕмĕн наставник ĕçĕ-хĕлĕ пирки сăмах хускатрăм. Ĕçе чунĕпе парăннă вĕрентекен хăй хыççăн çултан-çул ырă йĕр çеç хăварса пырать. Çапла вара Надежда Лукинична ăс панă яшсемпе хĕрсенчен 20-ĕшĕ ытла хăйсен пурнăçĕнче вĕрентекен çулне суйласа илнĕ. Пурнăçне шкул ĕçне халалланă вĕрентекен тата директор вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе те тăтăш паллашса тăма, вăхăтра кирлĕ сĕнӳсем пама вăхăт тупать.

1984 – 2010 çулсенче пуçламăш классене вĕрентессипе ырă енчен палăрнăскерне директорăн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен çумĕ пулма шанаççĕ. 2011 çулта вара ăна шкул ертӳçин тилхепине тыттараççĕ. Йывăрлăхран хăраман хĕрарăм шанчăклăн ертӳçĕ ĕçне кӳлĕнет.

**Професси ӳсĕмĕ**

– Шкула эпĕ ачаллах юратнă. Çавăнпах пулĕ ӳсерехпе маншăн вĕренӳ те ăнса пынă. Çак юрату вĕрентекен ĕçне кӳлĕнсен те чакмарĕ. Ачасене ытларах тата тарăнрах пĕлӳ парасси мана пĕрремĕш урокранах кăсăклантарчĕ. Çапла вара хам туса пынă сăнавсемпе усă курса хамăн тепĕр ĕçтешĕмпе пуçламăш классене вĕрентнĕ чух ĕçлемелли ĕç тетрачĕ хатĕрлерĕмĕр. Çак ĕçе пурнăçа кĕртнĕ хыççăн мана «Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕренĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ» ят пачĕç, – кăмăллăн каласать Надежда Лукинична.

Сăмахăмăр професси ӳсĕмĕ çине кĕрсе кайнăран район, Чăваш Республикин Вĕренӳ министерствин Хисеп грамотисем çумне 2020 çулта Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Тав çырăвĕ те хушăннă. Тăрăшуллă директора вĕренӳ ĕçĕнче нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе пысăк ӳсĕм тунăшăн кăсал Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕн Алла Салаевăн Тав çырăвĕпе чысланă. Вĕсене пăхмасăрах шкулта та, ялта та ыттисемшĕн ялан тĕслĕх пулса тăракан вĕрентекен хăйĕн тĕп ӳсĕмĕ тесе шкултан вĕренсе тухса пурнăçра тĕрĕс çул суйласа илнисем тесе шутлать. Вĕсем вара унăн йышлă. Паян нумайăшĕн ачисем, мăнукĕсем Ильинкăри вăтам шкула çӳреççĕ.

**Çемье**

Надежда Лукиничнăпа Николай Геннадьевич Ивановсем 4 ача çуратса ӳстернĕ. Вĕсем пурте Ильинкăри вăтам шкулта ăс пухнă. Пурнăç çулĕ çине тухса аслă пĕлӳ илнĕ. Ашшĕпе амăшне 2 мăнук парнеленĕ.

Ялта ырă тĕслĕх шутланакан ĕçчен мăшăр хăйсен тĕп ĕçĕнче (Николай Геннадьевич – водитель) тăрăшнисĕр пуçне пурнăçне килти хушма хуçалăхра та хастар. Вĕсем маларах çулсенче хăйсен килĕнче 2 ĕне, вăкăрсем тытнă, сыснасем усранă, кайăк-кĕшĕк ĕрчетнĕ. Вĕсен сад-пахчи пуян пулни те вăрттăнлăх мар. Картиш çимĕçне паян та йăлтах хăйсен тăрăшулăхĕпе туса илеççĕ вĕсем.

Йывăрлăх ĕçе парăнать, ĕçрех çамрăклăх упранать. Надежда Лукиничнăпа ирттернĕ тĕл пулура çак чăнлăха тепĕр хут çывăх ăнланса илтĕм. Пурнăç тулли пултăр тесен иртен пуçласа каçчен çичĕ хут тар юхтарса ĕçлемелле. Çавăн чухне çеç юратнă ĕçре те, тăван ялта пурăнакансем хушшинче те, округра-республикăра та, Раççейре те ырă ятлă пулăн. Ăна упрасси тата пуян опыта çамрăк ăрăва парса хăварасси – уйрăм сăмах.

**«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш çĕрĕн мухтавĕ» проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**

# Ентешпе мухтанатпăр



Учитель профессийĕн пĕлтерĕшĕ пысăк пулнине кура Раççейре Педагогпа наставник çулталăкĕ пырать. Пирĕн çĕршывра пур професси те пĕр пек кирлĕ. Анчах та ответлăраххисенчен тата сумлăраххисенчен пĕри – учитель профессийĕ. Учитель вĕренекенсемпе пĕрле ачалăх çулĕсенче, çамрăклăхра пулать. Çак вăхăта вĕсемпе пĕрле иртерет, çитĕнӳ тăвать, хăйĕн пĕлĕвне ачасене парать, чун-чĕрин пĕчĕк пайне вĕсен ăшне хывать.

Учительсĕр врач та, инженер та, агроном та, ăсчах та, учитель хăй те пулма пултараймасть. Учитель пуласси – чун туртăмĕ. Альбина Герасимовăра учитель пуласси ăшра хывăннă. Альбина Юрьевна Çулав ялĕнче учитель çемйинче çуралса ӳснĕ. Унăн ашшĕ Юрий Николаевич тата амăшĕ Римма Трифоновна – Ершовсен учитель династийĕн пуçаруçисем. Çак вăхăт тĕлне ку династири учительсен пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ 277 çула тапланать. Альбина Юрьевнăн ашшĕпе амăшĕ Турай шкулĕнче 40-шер çул ытла ĕçленĕ. Вĕсене иккĕшне те «Халăха çутта кăларас ĕç отличникĕ» паллăпа чысланă. Ершовсем – педагогика ĕçĕн ветеранĕсем.

Юрий Николаевич физика учителĕнче тăрăшрĕ, ĕç стажне 43 çула çитерчĕ. 22 çул хушши спорт радиопеленгаци кружокне ертсе пычĕ. Унăн вĕренекенĕсем çулсерен районпа республика ăмăртăвĕсен чемпионĕсемпе призерĕсем пулса тăчĕç, пĕтĕм Раççей ăмăртăвне хутшăнчĕç. Вĕренекенсем Юрий Николаевича ырăпа аса илеççĕ, уявсемпе саламлаççĕ. Вăл компьютер тапхăрĕ пуçлансан ăна алла малтан илекенсенчен пĕри пулчĕ, çĕнĕ предмет, компьютер урокне вĕрентме тытăнчĕ, çак ăсталăха шкулти ачасемпе учительсене пачĕ.

Римма Трифоновна ачасене математика вĕрентрĕ, ĕç стажне 46 çула çитерчĕ. Яланах тĕрĕслĕхшĕн çунаканскер, ачасенчен çирĕп ыйтатчĕ, вĕсене тарăн пĕлӳ парассишĕн тăрăшатчĕ. Унăн чылай вĕренекенĕ математика учителĕн профессине суйларĕ. 25 çул хушши вăл шкулта завучра тăрăшрĕ, вĕренӳпе воспитани ĕçне йĕркелесе пычĕ. Ăна ачасемпе ашшĕ-амăшĕ, шкулти тата районти учительсем хисеплетчĕç.

Альбина Юрьевна вара мĕн ачаран ашшĕ-амăшĕн ĕçне курса ӳснĕ, вĕсем урока хатĕрленнине, тетрадьсем тĕрĕсленине, уроксем хыççăн ачасемпе кружокра ĕçленине курнă, ачасене воспитани парасси тата шкул ĕçĕ-хĕлĕ пирки калаçнине тăтăшах илтнĕ. Альбина Юрьевна Турай шкулне ылтăн медальпе вĕренсе пĕтернĕ хыççăн ашшĕ-амăш çулĕпе кайса учитель пулма шухăшланă. Вăл И. Яковлев ячĕллĕ педагогика университетĕнчи технологипе экономика факультетне вĕренме кĕнĕ, аслă пĕлĕве хĕрлĕ дипломпа вĕçлерĕ.

1998 çулта Турай шкулĕнче унăн педагогика ĕçĕ пуçланчĕ, вăл ĕç урокĕ тата рынок экономики вĕрентрĕ. Çамрăк учителе ачасем кăмăлласа йышăнчĕç. Альбина Юрьевна хĕр ачасене çĕлеме, çыхма, тĕрлĕ çимĕç хатĕрлеме тата ыттине вĕрентрĕ. Унăн активлăхĕпе ăсталăхĕ палăрса тăчĕ, вăл ачасене район тата республика олимпиадисене, тĕрлĕ конкурса хутшăнма хатĕрлерĕ. Унăн вĕренекенĕсем малти вырăнсене йышăнчĕç.

2001 çулта ăна вĕренӳ ĕçĕнче пысăк çитĕнӳ тунăшăн Раççей Федерацийĕн Вĕренӳ министерствин Хисеп грамотипе чысларĕç. 2006 çулта вăл Раççей Федерацийĕнче чи лайăх учительсен конкурсĕнче çĕнтерӳçĕсен йышне кĕчĕ, укçа хавхалантарăвне тивĕçрĕ. 2010 çулта вара Чăваш Республикинчи лайăх учительсен йышне кĕчĕ. Çав вăхăтра вăл татах та вĕренчĕ, çĕнĕ пĕлӳ илчĕ, яланах çĕнĕ технологи патне ăнтăлатчĕ. Кусăмсăр майпа информатика учителĕ пулса тăчĕ.

Пултарулăхĕ пысăк пулнине кура 2016 çулта Альбина Юрьевна Шупашкар хулине ĕçлеме куçрĕ, 4 номерлĕ лицейра информатика предметне вĕрентме тытăнчĕ. Кунта та вăл хăйне пултаруллă учитель шайĕнче кăтартать. Кашни кун урока васканă май вăл учитель ĕçĕ пысăк ответлине туйса тăрать. Учителĕн предмета тĕплĕн пĕлмелле, ачана вĕрентмелле, лайăх кăтартусем тумалла, урокра панă материала класри кашни ачан пĕлмелле.

Класри ачасем вара расна. Альбина Юрьевна кашни ачана туйма, ăна хăйĕн предмечĕпе кăсăклантарма, пурнăçра вăл пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнлантарма тăрăшать. Лицейра вĕренекен ачасем унăн тăрăшулăхне туйса илчĕç, урокра, конкурссемпе олимпиадăсенче лайăх кăтартусемпе савăнтарчĕç. Унăн чылай вĕренекенĕ информатика экзаменĕнче 100 балл илме пултарчĕ. Муниципалитетпа регион конкурсĕсемпе олимпиадисенче çĕнтерӳçĕсемпе призер йышĕнче унăн вĕренекенĕсем яланах пур. Юлашки пилĕк çул хушшинче çĕнтерӳçĕсемпе призерсем 100 ытла.

Ачасене информатикăпа ытларах кăсăклантарас тесе Альбина Герасимова лицейра «3D-моделирование» тата «IT-технология» кружоксем ертсе пыма тытăннă. Çавна май ачасен конкурссемпе олимпиадăсенчи кăтартăвĕсем татах та ӳснĕ. «Молодые профессионалы» регион чемпионатĕнче инженери дизайнĕнче, пĕтĕм Раççейри «3D-фишки», «3D технологи» олимпиадисенче кăтартусем чăннипех те пысăк.

Пултаруллă педагог хулапа республика семинарĕсене активлă хутшăнать, хăйĕн ĕç опытне ĕçтешĕсемпе пайлать, професси интернет пĕрлĕхĕнче калаçу иртерет. Ăна çулсерен хула, республика, пĕтĕм Раççей мероприятийĕсен эксперт тата судья комисси йышне кĕртеççĕ. Унăн Санкт-Петербургри «Эксперт проекта «Инженеры будущего: 3D технологии в образовании», пĕтĕм Раççейри «3D технологии» олимпиадин пĕтĕм Раççей тата регион шайĕнчи эксперчĕ тата ытти статус пур.

Альбина Юрьевнăна ĕçтешĕсем, ачасемпе ашшĕ-амăшĕ хисеплет. Ĕç кăтартăвне кура ăна 2018 çулта Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотипе чысланă. Тепĕр çулхине вара чи лайăх учительсен конкурсĕнче çĕнтерӳçĕ пулса 200 пин тенкĕ укçа парса хавхалантарчĕç. Унăн чыславĕ татах та чылай. 2019 çулта вăл «Ĕç ветеранĕ» ят илме тивĕçрĕ, 2021 çулта «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ» пулса тăчĕ.

Альбина Юрьевнăшăн учитель професси пурнăçра тĕп вырăн йышăнать. Кашни ир вăл ĕçе хаваспа каять, мĕншĕн тесен ăна унта ачасем кĕтнине пĕлет. Хăй те нумай пĕлессишĕн тăрăшать, ачасене тарăн пĕлӳ парассишĕн тимлет, пысăк çитĕнӳсем патне ăнтăлма яланах хатĕр. Пысăк опытлă педагог вĕренӳ сферинче çӳллĕ шайри специалист пулма тăрăшать. Унăн чи паха енĕ – ачасене тата хăйĕн профессине юратни.

**Ирина ИВАНОВА.**

# Спорта аталантарать



Çын сывлăхĕ уйрăм çынпа пĕрлех обществăшăн та пĕлтерĕшлĕ. Çавăнпа сывă пурнăç йĕркине тытса пыракан 100 çулччен пурăнма пултарассине наука та хирĕçлемест. Ăна пăхăнасси вара шкул çулĕсенче вăй илет. Кунта физкультура учителĕн тӳпи пысăк. Пирĕн паянхи калаçу никĕсĕнче – Шурчари шкул пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта 34 çул ачасене физкультурăпа вĕрентекен Олимпиада Бардасова.

Шупашкар районĕнче çуралса ӳснĕ хĕр Канашри педагогика училищи хыççăн 1989 çулта направленипе йĕркипе пирĕн тăрăха ĕçлеме килет. Спортпа туслă физкультура учителĕ 2018 çулта Шурча шкул ачисене мас-рестлинг (патак туртса çĕнтересси) вăйăпа туслаштарать. Спортăн çĕнĕ тĕсне ачасем хапăл тусах йышăнаççĕ.

Мас-рестлинг – наци спорчĕн тĕсĕ. Кĕске вăхăтрах Шурчари шкул ачисем республикăри ăмăртусене хутшăнма пуçлаççĕ, республикăн пĕрлештернĕ командине кĕреççĕ. Кунта Олимпиада Виталиевна тĕрлĕ шайри ăмăртусенче ырăпа палăрнă С. Борисова, К. Никифорована, В. Александровăна ырăпа палăртрĕ. Вĕсем Чăваш Енрисĕр пуçне Раççейре те палăрнă ĕнтĕ. Паян Шурча шкулĕнче вĕренекен Д. Димитриевăпа К. Иванова та ырă шанчăк параççĕ.

Шкулта спортăн тĕрлĕ тĕсĕ аталаннăран РФ Спорт министерствин Хисеп грамотине тивĕçнĕ вĕрентекен футболла вылясси те анлă саралнине палăртрĕ. Кунта вĕреннĕ хыççăн Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинче ăсталăх туптанă Н. Антонова маутинбайкпа, У. Андреева ухăран тĕл перессипе спорт маçтăрĕн нормативне тултарнă.

**Анатолий БЕЛОВ.**

Уявран

# Аслă ăру умĕнче пуçа таятпăр

**Сентябрĕн 29-мĕшĕнче Муркашри Культура çуртĕнче Ватă çынсене халаллană савăнăçлă уяв иртрĕ.**



Çанталăкĕ те уяв валлиех тейĕн, ăшă, таврара çав тери илемлĕ, ылтăн çулçăллă кĕрхи кун чуна çĕклет. Çынсем зал туллиех пухăннă. Уява килнисем çине пăхсан чун савăнчĕ, вĕсене ватă тесе калаймăн. К

ашни çын хăй вăхăтĕнче район аталанăвне пысăк тӳпе хывнă, халĕ те вĕсем активлă та пуçаруллă, общеcтвăлла ĕçре хастар, спортра çивĕч, юрă-ташăра маттур. Пĕтĕмлетсе каласан – вĕсем пур енĕпе те ырă тĕслĕхри çынсем.

Уява пухăннисене Чăваш Республикин гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ĕçĕсен патшалăх комитечĕн ертӳçи Сергей Павлов саламларĕ.

– Сире Ватă çынсен уявĕпе саламлатăп. Эсир çамрăк ăрăва хăвăр пĕлĕве, ăс-тăна, ăсталăха, патриот туйăмне паратăр, ĕçлеме тата пурăнма, йывăрлăха çĕнтерме, пурнăçа хаклама вĕрентетĕр. Çирĕп сывлăхпа ăнăçу, вăрăм кун-çул сунатăп, пурнăç вăй-хăвачĕ сирĕнте нумай çуллăха пултăр, – терĕ республика представителĕ уявпа саламласа.

Муркаш муниципалитет округ пуçлăхĕ Алексей Матросов тата хăй ячĕпе аслă ăрăва округ администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Лилия Тарасова саламларĕ.

– Округ пуянлăхĕ вăл – унăн çыннисем. Эсир – вĕсен пĕр пайĕ. Район аталанăвĕнче сирĕн тӳпе пысăк. Эсир культурăпа спорт тата общеcтвăлла ĕçсенче хастар, сирĕнпе мăнуксемпе кĕçĕн мăнуксем хăпартланнине туйса тăратăп. Хальхи кăткăс лару-тăруран та эсир аякра мар, пирĕн салтаксене пулăшса тăратăр, вĕсем валли маскировка сеткисем çыхатăр, çĕнтерĕве çывхартатăр. Сирĕн çине пăхса çапла калас килет, енчен те çын чунпа çамрăк пулсан, ватлăх вăл йăнăш кăна. Яланах çапла хастар та çамрăк пулăр, – терĕ Лилия Тарасова уява пухăннисене саламласа.

Л. Тарасова активлă ветерансене округ администрацийĕн Тав çырăвне парса чысларĕ. Çавăн пекех фронтри салтаксем валли маскировка сеткисем çыхса пулăшакансем те округ администрацийĕн Тав çырăвне тивĕçрĕç.

Уява пухăннисене депутатсен округ Пухăвĕн председателĕ, «Единая Россия» партин вырăнти уйрăмĕн секретарь полномочине пурнăçлакан Александр Иванов саламларĕ, хастар ветерансене «Единая Россия» партин Тав çырăвне парса чысларĕ.

Сцена çине округра аслă ăру çыннисемпе ĕçлекен общеcтвăлла организацисен ертӳçисем тухрĕç. Ветерансен канашĕн ертӳçи Елена Максимова ветерансем çулран-çул хастарланса пынине, мероприятисене ытти район ветеранĕсемпе пĕрле иртернине пĕлтерчĕ. Кăçал Элĕкпе Етĕрне округĕсенчи ветерансемпе туслă хутшăну пулнă.

АПК ветеранĕсен округри канашĕн ертӳçи Валерий Вязов пухăннисене пĕрле ĕçленишĕн ăшшăн тав туса саламларĕ. Общеcтвăлла организацисем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçленине, мероприятисене те пĕрле иттернине пĕлтерчĕ. Валерий Иванович çивĕч ветерансене – спорт тусĕсене – ГТОн ылтăн паллине парса чысларĕ.

Раççей пенсионерĕсен пĕрлĕхĕн Муркашри уйрăмĕн ертӳçи Петр Скворцов ветерансен тĕрлĕ мероприятинчи активлăхне палăртрĕ, пенсионерсем округри тата ун тулашĕнчи ĕçсенче малти вырăнсене йышăннине пĕлтерчĕ. Мĕн калани пушă сăмах мар, йăлтах ĕçпе çирĕплетни. Уяв сцени çинче чечек конкурсĕнче пултаруллисене те чысларĕç.

Пĕтĕмлетсе каласан вара уяв сцени çинче питĕ нумай ветеран тухрĕ, кашниех вăл е ку ĕçре хастар. Вĕсен ячĕпе ăшă сăмахĕ те нумай пулчĕ. Юрă-ташă ветерансем ячĕпе парне пулчĕ, уйрăмах пĕчĕк артистсене пăхма кăмăллă.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**

**Надежда СУВОРОВА сăн ӳкерчĕкĕсем.**






# Ватăсене чысларĕç

Сарă хĕвел пăхать, сарă çулçăсем вĕлкĕшсе ура айне ӳкеççĕ. Мĕн тери илемлĕ кĕркунне. Кĕркуннепе пĕрлех аслă ӳсĕмри асаннесене, асаттесене саламламалли кун çитсе тăчĕ.

Ялта пĕлтерӳ хăми çинче Çатракасси территори пайĕн йыхрав хучĕ çакăнса тăрать. Сентябрĕн 28-мĕшĕнче аслă ӳсĕмрисене Ватă çынсен кунне паллă тума 11 сехете Çатракасси шкулне пухăнма ыйтнă. Кайса курас терĕмĕр эпир те, 70 çул урлă каçнă кӳршĕсем.

Малтанах пире Çатракасси шкулĕнче вĕренекенсем ташă-юрăпа савăнтарчĕç. Мĕн тери пултаруллă, мĕнле хусканусем тăваççĕ. 3-мĕш класра вĕренекенсем шурă лĕпĕшсем евĕр. «Россия» ташăна чуна тивмелле ташларĕç аслăрах классенче вĕренекенсем.

Пухăннисене çитсе килекен Ватă çынсен кунĕпе территори пайĕн пуçлăхĕ Надежда Никитина, депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн депутачĕсем Виталий Прокопьев, Александр Давыдов саламларĕç.

Концерт хыççăн Торинкасси, Шупуç, Çĕньял Очăкасси ялĕсенчен килнĕ ватăсене çавра сĕтел хушшине чĕнчĕç. Сĕтел тулли улми-çырли, пĕремĕк-канфечĕ, техĕмлĕ чей.

Александр Давыдов кăмăл турамĕ тесе пурне те пĕчĕк парнесем парса савăнтарчĕ, ăшă сăмахсем каларĕ.

Виталий Прокопьев, Çатракасси шкулĕн директорĕ, шкул пурнăçĕпе паллаштарчĕ. Вĕренекенсен çитĕнĕвĕсем сахалах мар. Шкула ылтăн медальпе вĕçленисем, спортра çитĕнӳ тăвакансем çук мар, «Артека» кайма тивĕçнисем те пур. Ачасем ташă-юрăра та ăста.

Эпир, ватăсем, пире уяв туса панăшăн питĕ кăмăллă юлтăмăр.

**Людмила ИВАНОВА.**

# Пире те уяв туса пачĕç

***Сентябрĕн 28-мĕшĕнче Йӳçкасси территори пайĕнчи 13 ялти ветерансем Йӳçкассинчи Культура çуртне йышлăн пухăнчĕç. Уява 60 ытла çын хутшăнчĕ.***

Аслă ăрăвăн савăнăçлă уявне территори пайĕн ертӳçи Анатолий Кузьмин уçрĕ. Вăл вырăнти ĕç-хĕлпе паллаштарчĕ, ял пĕвисене тасатни, çул-йĕр юсани тата ытти ĕç пирки, çитес вăхăтра тумалли ĕçсем çинчен пĕлтерчĕ.

Депутатсен округ Пухăвĕн депутачĕ Валентина Егорова та ватă çынсене саламлама килнĕ. Йӳçкасси чиркĕвĕн настоятелĕ Сергий атте ветерансене сума суса ăшă сăмахсем каларĕ. Ветерансен канашĕн ертӳçи Геннадий Малинин та пире саламларĕ, вăл ватă çынсен уявне лайăх йĕркеленĕ.

Юрă-ташă пирĕн чуна çĕклерĕ. Вĕри чей ĕçсе ăшшăн калаçса ларма май пулчĕ, хамăр ĕçленĕ вăхăтсене аса илтĕмĕр. Уявпа эпир пурте кăмăллă пултăмăр, тавах ăна йĕркелекенсене.

Пĕтĕмĕшле илсен, уява пухăннисем – хăй вăхăтĕнче вырăнти хуçалăхра ĕçленĕ çынсем. Хуçалăх мĕнле ĕçлени пирки пирĕн пĕлсе тăрас килет. Анатолий Кузьмин хуçалăх мĕнле ĕçлесе пыни çинчен кĕскен каласа кăтартрĕ. Çакă та савăнтарать. Уява иттернĕ кун юлнă 70 гектар çĕр улмие «Ударник» хуçалăхра ыран-паян кăларса пĕтерессине пĕлтерчĕ. Чăн та кăçал çанталăк тыр-пул пухса кĕртме май пачĕ.

# Яланах тӳрĕ чунпа ĕçленĕ

Манăн паянхи сăмахăм Йӳçкасси тăрăхĕнчи Анатри Панклири паллă çынсем пирки. Вĕсен шутĕнче «Ударник» хуçалăха нумай çул ăнăçлă ертсе пынă П. Давыдов уйрăм вырăн йышăнать. Раççей çар офицерĕсем И. Охотин майор, Н. Александров майор, С. Иванов подполковник, С. Деомидов майор, В. Ильин полковник, А. Ильин Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ. Вĕсенчен хальхи вăхăтра Сергей Деомидов çеç пурăнать, вăл 88 çулта.



Çак ял вара уйрăм ĕçченсемпе те пуян. Вĕсенчен пĕри – çак ялта çуралса ӳснĕ паллă комбайнер Игнатий Кириллов. Нумай пулмасть вĕсен хăтлă та тирпейлĕ çуртĕнче калаçса лартăмăр. Тӳрех калатăп, манăн аслă тусăм маларах асăннă паллă çынсенчен нимĕнпе те кая мар. Игнатий Кириллов та тăван ен мăнаçлăхĕ пулса тăрать.

Хăйĕн ĕç ĕмĕрĕнче 35 çул комбайнпа ĕçлесе миçе гектар тырă вырман пулĕ вăл. Çав вăхăтра хăйĕн «хир карапне» яланах юсавлă та тирпейлĕ тытнă. Шанса панă ĕçе пурнăçланипе ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăнă. Вырмара çуллен активлăхпа палăрнă, тăрăшуллă механизатор темиçе хутчен те ĕç паттăрĕ пулса тăнă, малти вырăнсене йышăнса ырă ята, медальсене тивĕçнĕ. В. Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнĕ ятпа панă медаль те пур унăн. Вăл «Золотой колос» медале те тивĕçнĕ. Комбайнерсен ăмăртăвĕнче нумай хутчен малти вырăнсене йышăннă. Ăста механизаторăн алли «ылтăн», вăл кирек хăш ĕçре те пултаруллă.

Ачаллах вара тыррине те алăпа вырнă, утă çулнă, колхозри пур ĕçе те хутшăннă, фермăра выльăх пăхассинчен те пăрăнман. Игнатий Кириллов йывăр вăхăтра 1933 çулхи октябрь уйăхĕнче çуралнă, çак уйăхра 90 çул тултарать.

1959 çулта кӳршĕри Элĕк районĕнчи Какаç хĕрĕпе Лидăпа çемье çавăрнă. Туслă та ĕçчен мăшăр тăватă ачана пурнăç çулĕ çине кăларнă. Халĕ икĕ ывăлпа пĕр хĕр пурăнаççĕ. Пурте çемьеллĕ. Паянхи куна вĕсен 11 мăнук, кĕçĕн мăнук 8. Мăшăр пĕрле 64 çул килĕштерсе пурăнать. Игнатий Кирилловăн ĕç стажĕ 50 çул. Ялти хисеплĕ çемьене малашне те нумай çул таса сывă пурăнма ăнăçу сунса уйрăлтăм.

**Илья ЯКОВЛЕВ.**

**Хурăнкасси ялĕ.**

Ятарлă çар операцийĕ

# «Пăчă-и, сивĕ-и… эпир – салтаксем»

Муркаш тăрăхĕнчи Дмитрийпе вăл ятарлă çар операцийĕнчен отпуска килсен курса калаçма тӳр килчĕ. Кĕрнеклĕ хул-çурăмлă салтак çирĕп кăмăллă, ĕçпе кăна калаçаканскер. Дмитрий Раççей çарĕнче контрактпа 2017 çултанпах службăра тăрать.

Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн вăл Мускаври химипе технологи профилĕпе аслă пĕлӳ паракан институтра ăс пухнă. Хыççăн вара призывпа Раççей çарне кайнă, учебка хыççăн Абхазири çар чаçĕнче службăра тăма пуçланă.

«Срочка вĕçленсе пыриччен контракт килĕшӳвне çыртăм. Аннене пĕлтернĕ хыççăн ĕненмерĕ, контракта эпĕ апрелĕн пĕрремĕшĕнче çырнă-çке. Шăпах çавăнпа шӳтлетĕп тесе шухăшланă вăл. 2020 çулта контракта тепĕр виçĕ çуллăха тăсса çыртăм. 2022 çулхи февралĕн 24-мĕшĕнче эпир перрон çинче тăраттăмăрччĕ. Пур çĕрте те хыпар пĕлтерĕççĕ – ятарлă çар операцийĕ пуçланнă. Приказ пулчĕ те, эпир çавăн чухне тӳрех Абхазирен Крыма çула тухрăмăр. Пире танкистсем патне явăçтарчĕç. Эпĕ хам пехотăран, повар. Мана танкистсем патĕнче те поварта ĕçлеме хăварчĕç. Пĕр вăхăт вĕсем патĕнче пулнă, çавăн чухне вĕсен пурлăхне те сыхланă.

Хыççăн апрельте каялла пехотăна куçарса кайрĕç. Çапла пĕлтĕрхи апрельтенпе эпир ятарлă çар операцийĕнче. Хамăрăн чаçри салтаксене тивĕçтерекен взводра тăратăп. Хальхи вăхăтра малти линире салтаксене пĕçерсе çитерме май çук. Çавăнпа та эпир вĕсем патне салтак паекне, шыв, боеприпассем, газ, ăшă çи-пуç, ыттине турттарса тăратпăр. Апат пирки калас пулсан, тепĕр чухне хăвăрт пиçекен продуктсемпе усă курма та тивет. Халĕ тĕрлĕ йышши тушенка та илсе килкелеççĕ, япăх мар. Тепĕр чухне кăлпасси пулать, халĕ ытларах вакуумрипе тивĕçтерсе тăраççĕ – пăсăлмасть.

Малта кăшт лăпкăрах чухне эпир унтах пĕçерсе çитернĕ. Хальхи вăхăтра пире каярах хăварчĕç, мĕншĕн тесен дронсем час-часах вĕçеççĕ. Çавăнпа та хатĕр апата, ытти продуктсене хăвăрт-хăвăрт пушатса хăвармалла та каялла таврăнмалла. Шӳтлесерех калас пулсан, пирус туртса тăма унта ытлашши пĕр минут та çук. Салтаксем патне машинăпа çӳретпĕр, пирĕн машина çине те темиçе хутченех вог пăрахни пулнă... Çавăнпа та питĕ хăвăрт çӳреме тивет, паллах кăнтăр кунĕнче мар ĕнтĕ», – çапла каласа парать Дмитрий хăйĕн тивĕçĕ пирки.

Салтаксем, пĕтĕмĕшле илсен, апатçимĕçпе кăмăллă пулнине калать Дмитрий. Тыла тухсан вара вĕсем хăйсем валли хăйсемех пĕçерсе çиесшĕнни те пулать, тет. Килти пекрех пултăр теççĕ ĕнтĕ.

«Малти линире çапăçакансем çиессишĕн темелле мар. Вĕсене шыв кирлĕ яланах», – тет салтак.

Дмитрийĕн те, ытти салтакăн пекех, контракт килĕшĕвĕ малалла автоматла йĕркепе тăсăлса пырать. «Эпир çĕнтерессишĕн тăрăшатпăр. Çĕнтерӳ тумаллах», – тет контрактник.

Вĕсен чаçне гуманитари пулăшăвĕ ытларах Краснодар енчен килнине калать вăл, мĕншĕн тесен чаçри салтаксенчен чылайăшĕ çавăнта çуралса ӳснисем иккен.

Иртнĕ хĕлле вĕсем Херсон тăрăхĕнче пулнă, ытла сивех пулман. Халĕ урăх вырăнта. «Пăчă-и, сивĕ-и... эпир – салтаксем», – тет Дмитрий эпĕ çанталăк условийĕсемпе кăсăкланнă хыççăн.

Дмитрий лайăх специальноç илнĕ пулин те, контракт çырнăшăн ӳкĕнменнине калать. «Специальноçĕ манăн питĕ сайра тĕл пулаканни (рудара питĕ пĕчĕк калăпăшпа тĕл пулакан материалпа ĕçлекенскер), çителĕклĕ укçа-тенкĕпе те хама иртерех тивĕçтерес килчĕ манăн. Атте-анне ĕнси çинче лариччен контракт килĕшĕвĕ çыратăп та, акă ман ĕç укçи пулать те тесе шутларăм. Абхазире ĕç укçин коэффициенчĕ те ун чухне кăшт пысăкрахчĕ. Ӳкĕнместĕп», – пĕлтерчĕ хальхи вăхăтра фронт линийĕнчи ялсенчен нацистсене штурмласа кăларакан салтаксене вĕри апатпа тивĕçтерекен аслă повар.

**Наталия НИКОЛАЕВА.**

Пăшăрхантаракан ыйту

# Карманкассисемпе катăкуйсен шыв ыйтăвĕ хăçан та пулин татăлĕ-ши?

Этем çимесĕр чылай вăхăт пурăнма пултарнине пĕлетпĕр, шывсăр вара пурнăç çук. Эпир, Шетмĕпуç тăрăхĕнчи Катăкуй тата Карманкасси ялĕсенче пурăнакансем, çакна питĕ лайăх ăнланатпăр, мĕншĕн тесен çак нушана хамăр çинче чăтса ирттеретпĕр.

Тĕрĕссипе, килсерен çăлсем чавса тултартăмăр. Çурхи шывпа çак çăлсем тулаççĕ, хĕле кĕнĕ çĕре çăлсенче шыв типет. Вылăх-чĕрлĕх валли пĕвесенчен усă куратпăр тейĕпĕр, хамăра ĕçме-çиме вара кӳршĕ ялсенчи башньăсенчен турттарма тивет хĕл каçипех.

Шыв ыйтăвĕ пирки эпир ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче И. Петрова ĕçленĕ вăхăтрах чан çапма пуçланă. Вăл тăрăшнипе халăхран укçа пуçтарса ĕç проектне тутарчĕ, документ экспертиза витĕр тухрĕ. Çав вăхăтра суйлав пулчĕ, пуçлăх улшăнчĕ – проект вара çухалчĕ.

«Сире шыв туса паратпăрах», – тесе шантарнăччĕ ун чухне района ертсе пыракан Ю. Иванов пире. Ун хыççăнхи ертӳçĕн Р. Тимофеевăн хуравĕ урăхларах пулчĕ: «Шывпа тăхтама тивет, республика кăнтăр районсене шывпа тивĕçтерессипе ĕçлет», – терĕ вăл.

Унтанпа чылай шыв-шур юхрĕ. Тĕл пулусенче, пĕрлехи информаци кунĕсенче халăх умне тухнă ертӳçĕсем умĕнче эпир яланах шыв ыйтăвне çĕклерĕмĕр – усси пулмарĕ. Пирĕн вырăнти пуçлăхсем Катăкуй тата Карманкасси ялĕсенче килрен çăл тунипе килĕшсе ларчĕç, хăшĕсен 3 çăл таран. Çуркуне пылчăкпа çăла кĕрекен шыв вĕсемшĕн таса шыв шутланнă.

Ял тăрăхĕнче юлашки вăхăтра ĕçленĕ Н. Васильев пирĕн терте ăнланчĕ тесе савăннăччĕ. Эпир кирлĕ документсене хатĕрлесе Чăваш Республикин Строительство министерствине çитернĕччĕ. Анчах пирĕн ертӳçĕ урăх ĕçе кӳлĕнчĕ. Пирĕн тăрăхран депутатсен Муркаш округ Пухăвĕн депутатне суйланнă А. Давыдов пирĕн ыйтупа ĕçлессе шанатпăр-ха эпир.

Пирĕн ялта район шайĕнчи хисеплĕ гражданин А. Петров пурăнать, кăçал 95 çул тултарчĕ. Вăл хăй вăхăтĕнче халăха çăкăрпе те çитернĕ, шывне те туса панă, вылăх-чĕрлĕх объекчĕсем, культурăпа вĕренӳ çурчĕсем тăвасси çине пысăк тимлĕх уйăрнă. Паянхи кун вăл пурăнакан ялта çынсем шывсăр ларни питĕ килĕшӳсĕр.

«Ма пĕр çирĕм çул çамрăк мар-ши?» – тесе пăшăрханать вăл шыв çинчен сăмах пуçарсан.

Çак статьяри чун ыратăвне хальхи вăхăтра округа ертсе пыракансем ăнланасса, пире таса шывпа тивĕçтерес енĕпе кирлĕ утăмсем тăвасса шанатпăр, пулăшу кĕтетпĕр.

Катăкуй, Карманкасси ялĕсенче пурăнакансем ыйтнипе
**Л. АЛЕКСАНДРОВА ĕç ветеранĕ.**

Редакци почтинчен

# Пурнăçри телей юмахĕ

Ылтăн кĕркунне хăйĕн илемĕпе тыткăнлать. Ешĕл курăк хăйĕн симĕс тĕсне тахçанах çухатрĕ ĕнтĕ. Хĕрлĕ, хăмăр тĕссемпе çунакан вăрман ерипен çаралма пуçларĕ, намăсланса çаралать тейĕн ăна. Кунсем самай кĕскелчĕç, ункченхи ăшă хыçа юлса пырать. Хĕвел текех çӳл тӳпене улăхса çитеймест. Апла пулин те кăнтăр вăхăчĕ чун-чĕрене ăшăтма тăрăшать.

Акă паян та хĕвеллĕ кун пулассӑн туйăнать. Ирхи пĕлĕт йăлтах сирĕлчĕ. Эпĕ, урама тухнăскер, хĕвел питĕнче ăшăнса тăратăп. Хĕлле кун пек килнеймĕстĕн вĕт. Çилĕ çук, таврара шăп, ытлашши пĕр сас-чĕв те илтĕнмест. Çут çанталăк шăпах. Çак вăхăтра чĕре хĕссе килнĕн туйăнчĕ, унпа пĕрле пуçа çиçĕм пек шухăш килсе кĕчĕ.

Кĕркуннехи пĕр кун ума тухрĕ. Пурнесем алăри туяна вăйлăрах чăмăртарĕç, хам та сисмерĕм, куç шывланчĕ. Ялтан инçех мар вăрман еннелле утрăм. Çамрăклантăм пулас, кăштах хам ăшра кулса илтĕм. Чĕре çамрăк чухнехи пек васкаса тапрĕ, чуна ăшăтса юн вĕриленсе илчĕ.

Эх, савни, савни, ăçта-ши эсĕ халь, пĕрремĕш юрату? Шăпа çапларах килсе тухрĕ çав, пурнăçра кашнинех хăйĕн çулĕпе уйрăммăн уттарчĕ. Телейне вара пĕр кунлăх кăна пачĕ. Васкамасăр утаттăмăр алран-алă тытăнса çав кун икĕ вăрман хушшипе. Ура айĕнче тем хулăнăш сарă çулçă выртать, вăл лăпкăн чăштăртатса пĕр-пĕрне çирĕпрех юратма хушать. Çăвара уçмасăр, куçран пăхнипех юрату çинчен калаттăмăр. Ĕмĕтсем таса та пысăкчĕ çав кун.

Вăрман патнелле çывхарнăçемĕн куçсем каллех шывланчĕç, ура вăйĕ таçта çухалчĕ. Туя çине таянса, сывлăш пӳлĕннине çĕнтерсе, икĕ вăрман хушшине çитсе тăтăм, малалла тинкеретĕп. Чим-ха, мĕн ку? Тĕлĕкре-ши эпĕ? Хăлхаран чĕнетсе пăхрăм та ыратнине туйрăм. Икĕ вăрман хушшипе алран-алла тытăнса васкамасăр пĕр мăшăр утать, йывăç çийĕн вĕсен кулли янăрать. Пĕри сулахай урипе, тепри сылтăммипе çул варрине сарă çулçă купалать. Чунăм вĕсем патнелле туртăнчĕ, çывхарма васкарăм. Вĕсем ман еннеле çаврăнса пăхрĕç те мана асăрхарĕç. Пĕр чĕнмесĕр малалла çул тăрăх уттарчĕç. Вĕсем – юрату тыткăнĕнче. Эпĕ мăшăр çине шăппăн кăна пăхса çул хĕрринчи тунката çине ларса юлтăм. Кĕркуннехи вăрманта вĕсен сасси илтĕнчĕ. Эпĕ канса ларнă хыççăн туя çине таянса ура çине тăтăм. Сар хĕвел йывăçсем çийĕн ăшшăн пăхрĕ ман çине. Эпĕ хамăн юратăва аса илтĕм те савăнса ялалла çул тытрăм.

**Вячеслав ПАГЕЕВ.**
**Хунтăкасси ялĕ.**

Октябрĕн 6-мĕшĕ – Раççей страховщикĕн кунĕ

**Раççей страховщикĕн кунĕпе – Раççей страховани компанийĕсен ĕçченĕсен професси уявĕпе саламлатăп!**

1921 çулхи октябрĕн 6-мĕшĕнче Раççей Совет Федеративлă Социализмла Республикинче РСФСР Госстрахĕ ĕçлеме тытăннă. Тепĕр 70 çултан унăн ĕçне Росгосстрах малалла тăснă. Шăпах çак датăна Раççейре страховани ĕçне-хĕлне пуçарнă кун тесе йышăннă.

Йĕркеленĕренпе пĕрремĕш кунран пуçласах Росгосстрах халăх хуçалăхне аталантарма, пĕлтерĕшлĕ экономика задачисене татса пама, уйрăм çынсен хуçалăхĕсемпе предприятисен пурлăхне сыхлама сахал мар ĕç туса ирттернĕ. Çулсем иртнĕ май граждансен пурлăхĕпе сывлăхне страхлассин пĕлтерĕшĕ ӳссе кăна пырать.

Страховани отраслĕн ĕçченĕсене професси уявĕпе саламлатăп тата ăсталăх тĕлĕшĕпе ӳссе пыма, организацисемпе гражданскене шанчăклă страховани хӳтĕлевĕпе тивĕçтерме сĕнетĕп, ăнăçусем тата çĕнĕ çитĕнӳсем сунатăп.

**Муркаш округĕн пуçлăхĕ**
**Алексей МАТРОСОВ.**

Саламлатпăр

Юратнă та хисеплĕ аннене, тăвана – Кĕçĕн Чураш ялĕнче пурăнакан **Елена Аверкиевна ИВАШКИНĂНА** юпа уйăхĕн 6-мĕшĕнче 55 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Сывлăху чăваш юманĕ пек çирĕп, ĕмĕрӳ аслă Атăл пек анлă, утас çулу такăр пулччăр. Ачусемпе телей курса пурăн, сăн-питӳ яланах савăнăçпа ялкăштăр, çĕр çинчи мĕнпур ырри, телей кӳркенни санпа пĕр çулпа утчăр. Ан чирле, ан ватăл нихăçан, пул хаваслă, кăмăллă ялан. Ăшшуна паратăн-çке чунтан, эсĕ хаклă пире ылтăнран. Тавтапуç сана, юратнă аннеçĕм, пире кун-çул парнеленĕшĕн, тĕрĕс çул çине тăратнăшăн. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр, Турра тав тăватпăр.



**Ăша салампа: ывăлĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, çывăх тăванĕсем.**

Хисеплĕ те хаклă тăвана, çывăх çыннăмăра, юратнă инкене, кинемее, асаннене – Кăпас ялĕнче çуралса ӳснĕ **Клавдия Порфирьевна ЧЕРНОВĂНА** октябрĕн 1-мĕшĕнче 95 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх, нумай савăнăçлă самант сунатпăр, санăн кунусем телейлĕ пулччăр.



**Салампа: çывăх тăванĕсем, Трифоновсем, Ивановсем, Черновсем, Мироновсем, Ягуновсем, пиччĕшĕн хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем тата çывăх çыннисем.**

Пирĕн чи хаклă çыннăмăрсем, юратнă аттепе анне – Çĕн Чемей ялĕнче пурăнакан **Людмила Владимировнăпа Николай Константинович КОЗЛОВСЕМ** çемье çавăрнăранпа 50 çул çитрĕ. Хаклă атте-анне, сире ылтăн туй ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Кил ăшшине упранăшăн, пире тĕрĕс-тĕкел ӳстерсе ура çине тăратнăшăн, яланах пулăшса пынăшăн сирĕн умăрта пуç таятпăр. Эсир пирĕншĕн – чи чаплă, чи юратнă, ылтăнран та хаклă çынсем. Эсир çумра пулнăран эпир телейлĕ. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе, юратса, савăнса пурăнма сире çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу, иксĕлми вăй-хал, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Эпир сире юрататпăр, хисеплетпĕр, эсир пурришĕн савăнатпăр.



**Чунтан юратса: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕ Савелий.**

Чи çывăх та юратнă çыннăмăра – Муркашра пурăнакан **Зинаида Васильевна ВОЛКОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăхпа вăрăм кун-çул, иксĕлми вăй-хал сунатпăр. Çывăх çынсен ăшшине, тус-тăван хисепне курса нумай çул пурăнмалла пултăр. Ачусемпе тата мăнуксемпе савăнмалла пултăр, мĕн шутлани пурнăçланса пытăр.



**Саламлаканĕсем: амăшĕ, пиччĕшĕсемпе йăмăкĕ çемйисемпе, çывăх тăванĕсем.**

Юратнă мăшăра, хисеплĕ аттене, кăмăллă асаттене – Чурикасси ялĕнче пурăнакан **Петр Иванович БОРЦОВА** октябрĕн 11-мĕшĕнче 65 çул тултарнă ятпа ăшшăн, чун-чĕререн саламлатпăр. Тĕнчери мĕнпур ыррине сунатпăр сана – тулăх пурнăç, куç тулли телей те ăнăçу. Мĕн шутланисем пурнăçланса пычччăр. Тăван кил ăшшине упраса пурăнма вăй-хăват пултăр. Çывăх çынсемпе савăнса пурăнма çирĕп сывлăх, тус-тăвапа яланах килĕштерсе пурăнма ырă кăмăл сунатпăр.



**Ăшă салампа: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, 7 мăнукĕ, Г. Бабушкин тус-тантăшĕ, Максимовсен çемйи.**

Пирĕн çывăх çыннăмăра – Пиккикасси ялĕнче пурăнакан **Светлана Зосимовна ДАНИЛОВĂНА** юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Вăрманти чи мăнаçлă юман пек çирĕп сывлăх, ирхи сывлăм пек таса кун-çул, инçе çул евĕр вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Умри çулу санăн яланах анлă та çутă, такăр пултăр, мĕн ĕмĕтленнисем пурнăçланса пычччăр.



**Ăшă салампа: Кошельковсен çемйи.**

Сывлăх

# Пĕр кашăк пыл çини те усăллă

Испанири Гранада хулинчи университет ученăйĕсем тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, каçхине пĕр кашăк пыл çини çывăрайманнипе тата ыйхă япăх пулнипе аптăракансене пулăшма пултарать. Кун пирки «Planet Today» пĕлтерет.

Пыл бактерисемпе кĕрешессин тата иммунитета çирĕплетессин енĕсемпе палăрса тăни тахçанах паллă. Унпа кăмăска чирĕсемпе, инфекципе тата вируссемпе кĕрешме усă кураççĕ. Ку хутĕнчи тĕпчевре вара ученăйсем çак çимĕç ыйхă килменнипе аптăракансене мĕнле майпа пулăшма пултарнине çирĕплетме тĕллев лартнă.

Сăнава 700-е яхăн çын хутшăннă. Вĕсем пурте ыйхă килменнипе аптăранă. Тĕпчев виçĕ уйăха тăсăлнă. Участниксем пурте кашни каç çывăрас умĕн пĕр кашăк пыл çинĕ. Лайăхрах йышăнма пыла ăшă шывпа хутăштарса ĕçнĕ.

Тĕпчев иртернĕ хыççăн, чылайăшĕ палăртнă тăрăх, вĕсем палăрмаллах лайăхрах çывăрма пуçланă, ыйхă лăпкăрах та тарăнрах пулнине асăннă.

Ученăйсем çакна гликоген дефицичĕпе çыхăнтараççĕ. Вăл çитменнине пула пӳре çи парĕ организмран адреналин тата кортизол кăларма тытăнать. Пылра ку япала çителĕклĕ. Çапла вара пыл пӳре çи парĕн ĕçне йĕркене кĕртме пулăшать тата ыйхă пахалăхне лайăхлатать.

Кунпа пĕрлех пылра организма лайăх витĕм кӳрекен ытти япала та çук мар. Сăмахран, унра триптофан, серотонин тата гормон туса кăларма пулăшакан аминокислота пур. Вĕсем лайăх кăмăл-туйăм тата лăпкăлăх кӳреççĕ.

Çавăнпа та çывăрас умĕн пыл çини стресса иртерме, лайăхрах çывăрса кайма пулăшать.

# 50 çул хыççăн организма çамрăклатма

Елена Соломатина диетолог 50 çул урлă каçнă çынсен организмне мĕнле продуктсем çамрăклатма май пани пирки каласа панă.

50 çул урлă каçсан çыннăн организмĕнче ватлăхпа çыхăннă процессем пулса иртме тытăнаççĕ. Вĕсем метаболизма тата организмăн хăш-пĕр функцийĕсене вăрахлатаççĕ. Вăраха пыракан чирсем ытларах систерме тытăнаççĕ. Кун пек чухне сывлăха рациона тĕрĕс йĕркеленипе сыхласа хăварма май пур. Елена Соломатина диетолог врач каласа панă тăрăх, 50 çула çитнĕ çыннăн обязательнăй майпа хăйĕн рационне тӳрлетӳсем кĕртес пулать.

Тĕрĕс мар апатланнипе вăраха пыракан чирсем çивĕчреххĕн палăрма тытăнма пултараççĕ. Ытларах чухне кусем вĕсем: çын самăрланни, атеросклероз, артери гипертонийĕ, чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсем. Иккĕмĕш йышши сахăр диабечĕ те аталанма пултарать.

Чи малтанах кондитер изделийĕсем, пылак çиессисене, сахăр газировки ĕçессине чакарас пулать. Какай, сиенлĕ çусем пирки те çавнах каламалла.

Ӳт-пĕве «çамрăклатас» тесен, обязательнăй майпа рациона çак çимĕçсене кĕртмелле:

- тинĕс продукчĕсем;
- тинĕс пулли;
- йӳçĕтнĕ сĕт продукчĕсем;
- кĕрпесем тата сĕлĕ пăтти;
- макаронăн хытă сорчĕсем;
- пучахлă культура çăнăхĕнчен пĕçернĕ çăкăр;
- витамин комплексĕсем.

Аслă ӳсĕмри çыннăн рационĕнче çавăн пекех чĕрĕ улма-çырла, пахча çимĕç тата курăксен яланах пулма тивĕç. Калăпăр, базилик, петрушка е кăшкар ути. Кунпа пĕрлех клетчаткăна ытлашши те йышăнма кирлĕ мар. Унсăрăн апат ирĕлтерекен система тĕлĕшпе пăтăрмахсем пулма пултараççĕ.

# Сивĕ... пулăшать те, сиенлет те

**Иммунитета çирĕплетет**

Çирĕпленнĕ çынсен сăмсипе карланкинчи тымарсен лăймака сийĕ сарăлмасть, çумĕнчи температури те ӳсмест. Çакă сиенлĕ микроорганизмсене ĕрчеме май памасть. Çирĕплени вăл – сивĕре тулта сивĕ шывпа сапăнни кăна мар, контрастлă душ кĕни кăна та мар. Ăна конькипе е йĕлтĕрпе ярăнса, уçă сывлăшра уçăлса çӳресе те çирĕплетме пулать.

**Çуллă ӳт-тир йĕркеленет**

Сивĕ сывлăш çуллă ӳт-тирлĕ çынсем çине лайăх витĕм кӳрет. Сивĕ температура чухне çуллă ӳт йĕркеленет. Типĕ ӳтлисене вара хĕнтерех, хĕлле вĕсен ӳчĕ ытла сисĕмлĕ пулать.

**Ыратнипе кĕрешет**

Урамри температура 5 градусран каярах пулсан, нерв вĕçĕсен сисĕмĕ çухалать, çавăнпа пуç мимине ырату сигналĕ çитме пăрахать. Хăшпĕр чухне пуç ыратнă вăхăтра сивĕ сывлăшра 30 минут уçăлса çӳрени çителĕклĕ – эсир хăвăра çăмăлрах туйма пултаратăр. Сирĕн ӳт çинче питĕ ыратакан пĕчĕк суран пулсан, пăр татăкĕ хурсан ыратни лăпланатех.

**Ăс-тăн ывăннине чакарать**

Эсир ĕçре питĕ ывăннă, анчах та организма формăна хăвăрт кĕртмелле-и? Хĕлле лоджи çине тухма е паркра тарăннăн сывласа уçăлса çӳреме юрать. Анчах та тулта 7 градус сивĕ пулсан, тарăннăн сывлама ан васкăр, чирлесе ӳкме пултаратăр.

**Иммунитета ӳстерет**

Сивĕпе сывлăх пĕр-пĕринпе çыхăнса тăраççĕ. Сивĕре физкультура тăвакан çынсен организмĕнче хӳтĕлĕх клеткăсем, пире хăратакан инфекцисемпе кĕрешекен лейкоцитсем активланаççĕ. Çав хушăрах иммунитета ӳстерме пулăшакан интерферонăн та ĕç тухăçлăхĕ ӳссе пырать. Тĕпчевсем пур: пĕчĕк температура иммунитета лайăх витĕм кӳнине çирĕплетсе параççĕ.

**Стреспа кĕрешет**

Нумайăшĕ хĕл вăл депрессипе стресс вăхăчĕ тесе шутлать. Анчах та ку вăл вăхăта ялан офисра е хваттерте ирттерме кăмăллакан çынсемшĕн тĕрĕс, мĕншĕн тесен вĕсем хĕлле уçăлса çӳреме килĕштермеççĕ.

Сывă пурнăç йĕркине тытса пыракан çынсемшĕн сивĕ – стреса хирĕç питĕ лайăх эмел. Урама тухнă чухне, юрпа витĕннĕ çулсем тăрăх уçăлса çӳренĕ чухне эсир хăвăр организма лайăх импульс паратăр. Сивĕ сывлăш пулăшнипе стресс пуçланма чăрмантаракан серотонин – телей гормонне туса илесси ӳссех пырать. Ученăйсем палăртнă тăрăх, кашни кун сивĕ сывлăшра пĕрер сехет уçăлса çӳрекен çын нерв системине чылай лăплантарать тата стресран сыхланассин çирĕплĕхне ӳстерет, мĕншĕн тесен пĕчĕк температурăра этемĕн вегетативлă нерв системи çирĕпленет.

**Вăрах чирсене çивĕчлетме пултарать**

Сивĕ чухне, ялан тенĕ пекех, вăраха кайнă чирсем аталанма пултараççĕ. Сире вăхăтра сиплемен колит, бронхит, ангина, гайморит тата ытти чирсем аса илтерме пултараççĕ. Çавăнпа та хĕллехи вăхăтра чирсен профилактикине лайăхлатас тесе хамăр сывлăха тимлĕн сăнаса тăмалла.

**Аллерги пулма пултарать**

Сивĕ çын сывлăхне япăх витĕм те кӳме пултарать. Сăмахран, температурăна пула сивĕре аллерги реакцийĕ пулма пултарать. Ытларах чухне вĕсем сывлăш температури Цельси шкалипе 10 градусран аяларах ансан пулма пултараççĕ. Çакăн пек чирсен малтанхи симптомĕ пĕтĕм ӳт-пӳ тăрăх шатра тухса тулни, шыçăсем тата хытă кĕçĕтни пулса тăраççĕ. Эсир хăвăр çинче сивĕн аллерги паллисене асăрхарăр пулсан, тӳрех тухтăр патне каймалла.

**Чĕрепе гипертони проблемисем**

Температура хăвăрт чакни юн тымарĕсем хĕсĕнсе ларнин сăлтавĕ пулма пултарать. Сивĕ çанталăкра стенокардипе инфаркт пулма пултарасси темиçе хут ӳсет. Çакăн пек сиенлĕ палăрăмсем ан пулччăр тесен, ăшă пӳлĕмрен урама васкаса ан тухăр. Подъездра пĕр-ик минут тăхтăр, организма хăнăхтарăр. Гипертонипе асапланакан çынсем хĕллехи вăхăтра хăйсене япăхрах туйма пултараççĕ.

# Астăвăма лайăхлатма

Хĕвел çаврăнăш тĕшшине çини питĕ усăллă иккен. Унта Е витамин нумай, вăл пуç мимин клеткисене ирĕклĕ радикалсемпе сиенленесрен хӳтĕлет, çакă вара ватлăх процесне вăрахлатать. Хĕвел çаврăнăш тĕшшинче фосфолипидăсемпе стеролсем пур – пурнăçа тăсма, çамрăклăха упрама тата çыннăн сывлăхне самаях çирĕплетме пултаракан япаласем.

Сăмахран, мăйăрта та çав япаласем çителĕклĕ. Пĕтĕм вăя çирĕплетме вара йĕтĕн вăрлăхĕ пулăшĕ: вăл альфа-линолевăй кислотапа пуян (Омега-3 – çуллă пĕр кислотисенчен пĕри). Çав кислота вара пуç мими валли чи кирлĕ стройматериалсенчен пĕрне ДГК (докозагексаеновăй кислота) туса кăларма пулăшать, çавăн пекех вăл сенсорнăй информацие тишкерекен пуç мимин лаптăкĕн ĕçĕшĕн яваплă.

**Какао**

Какао пăрçинче флавоноидсем пур. Антиоксидантсем, пуç мимин участокĕсем çине лайăх витĕм кӳрекенскерсем, астуса юлма тата вĕренме пулăшаççĕ. Çавăн пекех вĕсем çулсем иртнĕçемĕн пулакан пуç мимин улшăнăвĕсене чакарма пултараççĕ, çавăнпа шоколад татăкне каççерен чейпе çини лайăх. Паллах, шоколад çав вăхăтра пысăк какао-пăрçаллă (75 процентран кая мар) пулмалла.

**Симĕс чей**

Симĕс чей вăл – сывлăха та, пуç мимине те çирĕплетекен хăйне евĕр шĕвек. Симĕс чейре катехинсем – çут çанталăкăн антибактериллĕ антиоксиданчĕсем пур. Вĕсем ирĕклĕ радикалсем тапăнассинчен сыхлаççĕ, апла пулсан организм ватăлассине чакараççĕ, онкологи тата «ăс-тăн» чирĕсен профилактикине йĕркелеме пулăшаççĕ. Симĕс чейре кофеин пурри çинчен те манмастпăр, вăл пуç мими ĕçне хастарлатать тата асаилĕве лайăхлатать.

**Шпинат**

Шпинат, кирек мĕнле ешĕл курăк пекех, организмшăн питĕ усăллă, анчах пуç мимишĕн уйрăмах усăллă. Унта лютеин, бета-каротин, фолиевăй кислота тата витаминсем пур (сăмахран, К витамин). Пĕр сăмахпа каласан, активлă ĕçлеме тата когнитивлă функцисен ĕç-хĕлне хӳтĕлекен мĕнпур ĕç, вĕсен шутне шăпах асăнупа тимлĕх кĕреççĕ.

**Çăмарта**

Ку вăл – холинăн тĕлĕнмелле çăл куçĕ, клеткăсен мембранисен тĕп компонентчĕсенчен пĕри тата унăн ĕçĕн кирлĕ пайĕ. Шăпах холин – ацетилхолинăн нейротрансмиттерне туса кăлараканнин тĕп сăлтавĕ, вăл нерв клеткисен нерв импульсĕсене тĕплĕн тишкерме тата йышăнма май парать. Кашни кун холин çителĕклĕ пулсан ăс лайăх ĕçлет. Çăмартари В витаминсен ушкăнĕ пуç мимин хӳтĕлĕхне ӳстерет.

**Черника**

Черника – тĕлĕнмелле хура çырла. Унта марганец пур, вăл чăн малтанах куçа упрама, пĕр шайра тытма пулăшса тăрать. Анчах хура çырлан иккĕмĕш çăлăнăç пулăшăвĕ – пуç мимине хавхалантарасси тата асаилĕве лайăхлатасси. Çырлари полифенол, С тата К витаминсем, галловăй кислота пуç мимин клеткисене стресран тата дегенерацирен хӳтĕлеме пулăшаççĕ. Сăмах май, шухăшлав пултарулăхне хӳтĕлекен хура çырла çумне ытти «хура» çырласене хушма пулать – ежевикăна, чиене тата черешньăна.

**Пан улми**

Пан улминче усăллă витаминсем нумай. Ахальтен мар акăлчансен ваттисен сăмахĕ пур: кунне пĕр пан улми çисен, нимле врач та кирлĕ пулмасть (кунта вырăс халăхĕн «çамрăклатакан улмуççийĕсем» çинчен те аса илме вăхăт). Уççăнрах каласан, пан улминче антиоксидантлă флавоноид кверцетин пур: вăл пире тăнран каясран тата пуç мими ĕç-хĕлĕ чакасран хӳтĕлет.

# Грипп, ОРВИ, коронавирус

***Кĕрхи кунсенче ОРВИ, грипп тата коронавирус ерес хăрушлăх ӳсет. Симптомсене кура нумайăшĕ хăй мĕнпе чирлесе ӳкнине тĕп-тĕрĕс палăртаймасть, апла пулин те харпăр хăй тĕллĕн сиплеме тытăнать. Андрей Кондрахин терапевт врач пĕрремĕш паллăсем пулсанах çын мĕнпе чирленине епле майпа палăртмалли пирки каласа панă.***

**Грипп.** Специалист палăртнă тăрăх, грипăн уйрăмлăх палли вăл – пысăк температура, 40 градуса çитиех пулма пултарать. Çын сунасламасть, пырта кăтăклантармасть тата ыратмасть. Пысăк температура палăрать, сыпăсем тата пуç ыратать, куç хĕрелет, интоксикаци пулни сисĕнет.

**ОРВИ**. Çивĕч респираторлă вирус инфекцийĕ, гриппа танлаштарсан, уйрăм паллăсемпе пуçланать. Çын сунаслать, пыр ыратать, куççуль юхать. Кайран вара температура хăпарма пуçăнать.

**Коронавирус.** Коронавируса вара уйăрма çăмăлах мар. Специалист палăртнă тăрăх, вăл ытти чирсем пек палăрма пултарать. Çын унпа сиенленнĕ пулсан, ытларах чухне тутă тата шăршă пĕлменни пулать. Кунпа пĕрлех температура 40 градуса çити хăпарма пултарать. Тӳрех хăпарса каймасть, ерипен хăпарса пырать. Кайран вара вăл 38 градуса çити чакать те чылай вăхăт çав шайрах юлать.

**Пĕр пекрех симптомсем.** Эксперт каласа панă тăрăх, ОРВИ, грипп тата коронавирус чирĕсене асăннă симптомсене кура уйăрса илме пулать. Анчах та асăннă пур чир чухне те температура пĕр пек – 37,5 – 38 градус шайĕнче те тытăнса тăма пултарать. Çавăнпа та çын тепĕр чухне хăй тĕрĕссипе мĕнпе чирленине уйăрса та илеймест.

Асăннă чирсем çине çынсен организмĕн реакцийĕ тĕрлĕрен пулма пултарать. Симптомсем кашнин хăйне май. Енчен те эсир хăвăрта вĕсенчен пĕрне те пулин асăрхарăр пулсан, харпăр хăй тĕллĕн сипленме кирлĕ мар. Пĕрремĕш паллăсем пулсан çийĕнчех тухтăр патне каяс пулать. Специалист кăна тĕрĕс диагноз лартма тата кирлĕ сиплев палăртма пултарать. Унсăрăн хаклă вăхăта çухатма та пулать, чир вара шала каять.

**Хăçан вакцинациленмелле?** Специалист асăннă тăрăх, кунсăр пуçне шăпах халĕ грипран тата коронавирусран прививка тутарни тĕрĕс пулать. Çакна валли кая юлман-ха. Ковид пуçне çĕклеме тытăнать. Грипăн тата коронавирусăн сезонлăх енĕсем пур. Çавăнпа та вакцинациленсе харпăр хăйне ку чирсенчен сыхласа хăварма тăрăшмалла. Карантин палăрма тытăнсан вакцинациленме кая юлатпăр.

Терапевт грипран тата коронавирусран прививка мĕнле тутармалли пирки те каласа ăнлантарнă. Икĕ чирĕнчен те пĕр харăс та вакцинациленме юрать, çавăн пекех 15 кун тăхтав туса та. Калăпăр, малтан грипран прививка тутармалла, тепĕр икĕ эрнерен – коронавирусран.

Сĕнӳ-канаш

# Кĕрхи чи пĕлтерĕшлĕ 5 çырла

Çырласем – витаминсен тата минералсен пуххи. Вĕсем организма вируссенчен сыхлаççĕ, мĕн пур органпа система ĕçне пулăшаççĕ. Кĕркунне пиçсе çитекен çырласем те пур. Вĕсене шăпах халĕ хатĕрлесе хума тăрăшас пулать.

Çырлана чĕрĕлле те, тĕрлĕ майпа хатĕрленине те çиме пулать. Кĕрхи çырласене шăнтаççĕ, типĕтеççĕ, вĕсенчен компот е варени вĕретеççĕ, тĕрлĕрен джемпа десерт хатĕрлеççĕ. Çапах та хăш çырла ытларах усăллă-ха? Сывлăха çирĕплетме вĕсене рациона мĕнле хушмалли пирки **«Гемотест» лабораторин эксперт врачĕ Екатерина Кашух** каласа панă.

**Тути тата усси**

Пур çырлан та тенĕ пекех пĕлтерĕшлĕ енĕ – вĕсенче антиоксидантсем чылай пулни: антоциансем, флавоноидсем, каротиноидсем, танинсем. Асăннă япаласем клеткăсене çирĕплетеççĕ, вĕсене вăхăт çитмесĕрех арканасран хӳтĕлеççĕ, инфекцисене хирĕç тăма пултараслăха ӳстереççĕ.

Кун пек пулăшу пур чухне организма сывă пулма ансатрах. Сезон чирĕсем тата вăраха пыракан чирсем аталанма пултарассин хăрушлăхĕ чакать, çын хăйне лайăхрах туять. Кунпа пĕрлех кĕрхи çырласем – палан, кĕтмел, пилеш, сырлан – хăйсен усăллă енĕсемпе çуллахи çырласенчен (хăмла çырли, хурăн çырли, хурлăхан) пĕрре те кая мар. Çавăнпа та вĕсене рациона тăтăшах кĕртме тăрăшас пулать.

**1. Палан мĕнпе усăллă?**

Организма пĕтĕмĕшле çирĕплетнипе пĕрлех паланăн хăйĕн супер вăйĕ те пур. Сăмахран, унра С, К, А витаминсем тата В ушкăн витаминĕсем пур, çавăн пекех вăл калипе, магнипе, кальципе, фосфорпа тата тимĕрпе пуян. Вăл иммунитета çав тери лайăх пулăшать. Çавна май ăна рациона кĕртни сезонри респиратор чирĕсенчен сыхланма май парĕ.

Сыхланма май пулмарĕ пулсан, çырла часрах сывалма пулăшĕ. Антиоксидантсен шайĕ пысăккине пула вăл шыçăсене чакарассине çут çанталăк антибиотикĕ пекех пулса тăрать. Палан çавăн пекех артери юн пусăмне чакарать тата чĕрепе юн тымарĕсен ĕçне лайăхлатать.

Палан çырлине уйрăммăн та çиме юрать, çавăн пекех хушма çимĕç вырăнне те усă курма пулать: чей вĕретме, салатсенче усă курма т. ыт. те.

**2. Кĕтмел мĕнпе лайăх?**

Кĕтмел те (брусника) иммунитета пулăшать, сезон чирĕсенчен тата вăраха пыракан чирсенчен асăрханма май парать. Унра А тата С витаминсем, çавăн пекех минералсем пур: кали, магни, кальци тата фосфор. Çырла шăк çулĕн сывлăхĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать, юн тымарĕсемпе чĕрене, шăмăсемпе мышцăсене çирĕплетет.

Кĕтмелти биологи активлă кверцетин пĕрлешӳ шыçăна ирттерме пулăшать, апла пулсан шăнса чирлесен тата грипп ерсен хăвăртрах сывалма май парать. Кĕтмел çырлине чĕрĕлле те çиме пулать, çавăн пекех соуссене, смузие, чее те хушма лайăх.

**3. Кăвак çырла – десертсем тата пăтă валли.**

Кăвак çырла (голубика) иммунитета çирĕплетет кăна мар, антиоксидантсен шайĕ пысăккине пула пуç мимишĕн те пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать: тимлĕхе ӳстерет, астăвăма лайăхлатать. Çырлара А витамин нумай. Вăл вара куç сывлăхĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать, куç курассине лайăхлатать. Кăвак çырлари фоли кислоти нерв системине çирĕплетет, юнăн хĕрлĕ клеткисене туса кăларма пулăшать. Кăвак çырлана десерт вырăнне çиме юрать, кунсăр пуçне ăна пăтăна, йогурта, салата тата ытти блюдăна та хушма ирĕклĕ.

**4. Хура пилеш юн пусăмне йĕркеллĕ тăвать**

Хура пилеш шыçăсемпе кĕрешме пулăшать тата иммунитета çирĕплетет, артери юн пусăмне тата юнри холестерин шайне виçере тытма пулăшать. Çырларан варени вĕретме, компот е сĕткен хатĕрлеме, ăна тĕрлĕ блюдăна е чее хушма пулать.

**5. Чи ялтăркка çырла: сырлан**

Сырлан (облепиха) пирки те манмалла мар. Унра С витамин нумай, вăл инфекцисемпе лайăх кĕрешет. Е, К, А тата Н (биотин) витаминсем вара сурансене тӳрленме пулăшаççĕ, ӳт, çӳç тата чĕрне сывлăхĕшĕн пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнаççĕ. Сырлан çăвĕнче омега-3 çу кислоти пур, вăл чĕрепе юн тымарĕсен системине пулăшать, иммунитета çирĕплетет. Сырлан респираторлă чирсем, пыр ыратнă чухне усăллă. Çырларан морс е варени тума та пулать, чее хушсан та лайăх.

Çырласем тĕлĕшпе камăн асăрханулăрах пулмалла?

Кĕрхи çырласем çиессипе асăрхаттарусемпе чикĕлевсем нумаях мар, çапах та вĕсем пирки те манма юрамасть. Чи малтанах апат-çимĕç аллергийĕпе тата поллинозпа аптăракансен ялтăркка çырласем çиессинчен асăрханас пулать. Ӳт çинче те, апат ирĕлтерекен система тĕлĕшпе те уйрăм реакцисем пулма пултараççĕ. Енчен те ку е вăл çырлана эсир унччен çимен пулсан, малтанлăха ăна 5 – 10 штук çисен те çитет.

Пыршăлăх тĕлĕшпе проблема пуррисен кĕрхи çырласем чĕрĕлле çиессине чикĕлени кирлĕ. Вĕсен шутне пыршăн вĕчĕрхенӳ синдромĕ, юхан-суран количĕ, Крон чирĕ кĕреççĕ. Хырăм гастричĕ е юхан-суран çивĕчленнĕ чухне те çырла çиессинчен тытăнса тăни пăсмĕ. Çырласенче çут çанталăкри сахăр пур, çавăнпа диабетиксен те çырла çиессипе тимлĕрех пулмалла, виçене пĕлмелле.

**Алена ПАРЕЦКАЯ.**

# Гранат – витаминсен пуххи

Гранат – чĕрепе юн тымарĕсен тытăмне тытса тăмалли питĕ кирлĕ апат-çимĕçрен пĕри. В12 витамин нумай пулнине кура гранатăн тĕшши артери юн пусăмне йĕркене кĕртме пулăшать (ӳстернĕ чухне те, юн пусăмĕ чакнă чухне те), юн тымарĕсен стенкисене тĕреклетет, вĕсен пултарулăхне ӳстерет тата эритроцитсемпе гемоглобина активлă синтез тума пулăшать. Ку вара пуç мимипе нерв системин тĕрĕс ĕçĕшĕн пĕлтерĕшлĕ. Гемоглобин çитменнипе пуç мими кислород çителĕклех илеймест, çавна пула час ывăнтарать, асра тытассине тата концентрацие пăсать.

Гранат С витаминпа тата улма-çырла кислотисемпе пуян, вĕсем организма сиенленесрен хӳтĕлеççĕ тата иммуноглобулина ӳсме пулăшаççĕ – «строительство материалне», пирĕн иммун системине хӳтĕлеме хавхалантараççĕ. Унсăр пуçне гранат организма чирлĕ бактерисенчен шанчăклă хӳтĕлеме май паракан хăватлă антибактери тата антисептици системине йĕркелеме пулăшать.



Гранат сĕткенĕ тĕрлĕ улма-çырла кислотипе пуян – лимон, пан улми, хĕрлĕ эрех, кăшкар ути тата янтарь кислотисемпе. Вĕсем организмăн pH-балансне йĕркелеме пулăшаççĕ, шлаксемпе токсинсене тасатаççĕ, организмăн тухăçлă детоксикацие тивĕçтереççĕ, вар-хырăма ĕçлеттереççĕ тата метаболизма хăвăртлатаççĕ.

Гранат тата илемпе çамрăклăха упраса хăварма пулăшма пултарать. С витаминăн, улма-çырла кислотин тата дубильнăй япалан пысăк тытăмне пула, вăл таса радикалсем сиенленесрен шанчăклă хӳтĕлет, чирлекен реакцисене аталантарма чарать, ватăлнин процесне чакарать, пĕркеленчĕксене курăнми тăвать тата ӳте ультрафиолет кăларăмĕн сиенлĕ витĕмĕнчен хӳтĕлет.

# Хурт-хăмăра сиплессине кая хăварар мар

Пыл юхатрса илнĕ хыççăнах сăвăс чирĕнчен сиплеме васкамалла мар. Ун чухне йăвара çăвăр тухса пĕтмен-ха, çавăнпа та каярахри çăвăр ӳснĕ май сăвăс чирĕ йăварах юлать, ыттисем çине куçать. Маларах сипленĕ пур хурт та хĕле кĕреймесен те пултарать. Çавна май çемьесем вăйсăрланса пыраççĕ. Август пуçламăшĕнче рамăсем çинче çăвăр чылай, вĕсем шăпах та çемьен пуласлăхĕ шутланаççĕ, хĕл каçакансем – утарçăна шанăç паракансем – çаксем пулаççĕ. Çуллахи вăхăтра ĕç хурчĕсем 5 – 8 эрне кăна пурăнаççĕ пулсан, хĕл каçма юлакансен темиçе уйăх пурăнмалла. Вĕсен вĕллери ăшăна тытса тăмалла, амана хӳтĕлемелле. Çавăнпа та вĕсене тĕрĕс сиплемелле.

Утарçăсем фумисанпа варосан препаратсемпе ытларах усă кураççĕ. Ăна çемьере 30 кун хушши тытма юрать. Вĕсене 10 кун урлă шывра йĕпетсе тепĕр хут çемьене çакса парсан усси ытларах пулать. Çак сăтăрçă та сиенлĕ ытти хурт-кăпшанкă пекех препаратсене хăнăхса пырать. Çавăнпа та сиплев препарачĕсене вăхăтран вăхăта ылмаштарса тăмалла. Халĕ çĕнĕрен те çĕнĕ препаратсем тухсах тăраççĕ.

Сиплев курсĕсене кĕркунне кăна ирттернипе çырлахмалла мар, çуркунне те çак ĕçсене пурнăçламалла. Хурт-хăмăрăн чир-чĕр çуккине çирĕплетме çук, вĕсем те тĕрлĕ чирпе хавшаççĕ. Бипинпа усă курни те хурт-хăмăра лайăх сиплет. Унпа çăвăр çук чухне тата хурт йăвара чухне – кĕркунне – сиплеме тăрăшмалла. Çанталăк сивĕтнĕ май пыл хурчĕ йăваран тухмасть, шăпах та çавăн чухне вĕсене çак шĕвекпе пĕрĕхме тăрăшмалла.

Ытти ĕçе те вăхăтра тумалла. Вĕллесенчен пушă, пыл сахал тата хура тĕслĕ рамăсене кăларса илнĕ ĕнтĕ, çавăн пекех пачах та çăвăр кăларман рамăсене те корпусра хăвармалла мар.

Йăвара сăрă хуртсем юлманни çемьере ама пуррине пĕлтерет. Çемье йăвине çапла майпа йĕркелесен лайăх. Йăва хĕррисенче пылпа тулли пĕрер рама лартмалла. Юнашар тепрер хурт çăкăрĕпе пыллă рамăсем пулсан лайăх. Варрисенчи рамăсен йышĕ вара йăвари çемьерен килет. Пĕчĕкрех çемьере хурт шучĕ сахалрах, пысăккинче – чылай. Çакăн пек вырнаçтарнă сакăр рамăллă вĕллере çирĕм килограмм ытларах пыл пулма пултарать. Хĕл каçма хатĕр апата вĕллене ăçта вырнаçтарнинчен килет, уçă сывлăшрисене апат ытларах кирлĕ, хӳтлĕхрисем сахалтарах тăкаклаççĕ. Вĕллене хĕл каçма ытлашши рама хăварма кирлĕ мар, хуртсем вырнаçмалăх кăна пулмалла.

Çемьене пылпа танах хурт çăкăрĕ те кирлĕ. Утарçăсем каланă тăрăх, вĕсене йăвара икĕ рамăран ытла хăвармалла мар. Çак рамăсем çуркунне те кирлĕ пулаççĕ, ытлашшисене çавăн чухне валли те упраса хăвармалла. Хурт çăкăрĕллĕ рамăсене кĕве тапăнать. Ку тĕлĕшпе рамăсем упранакан вырăна апельсин хуппи, марльăпа çыхса хăмла, матрӳшке курăкĕсем хумалла. Вĕсемпе кĕрешме ятарлă препаратсем туянма май пур. Унсăрăн сăтăрçăсем рамăсене витĕрех шăтарса кăлараççĕ, çавăн пекех рамăсене шăши те кăшласа сăтăр тума пултарать.

Енчен те вĕллери пыл хĕл каçма çителĕксĕр тесе шухăшлатăр пулсан, пĕр тăхтаса тăмасăр сахăр сиропĕ парса çитермелле. Сиропа килте те хатĕрлеме пулать. Ку ĕçе вăраха тăсма юрамасть. Кормушкăна сироп панă хыççăн хуртсем шăтăк умне тухса сĕрлесе каялла кĕме пуçлани вĕсем апата йăвана куçарма пуçлани пирки калать. Анчах та сиропа пыла куçарма вĕсене питех те нумай вăй кирлĕ, çавăнпа та вĕсем çак вăхăтра начарланаççĕ.

Сентябрь вĕçнелле çăвăрсем тухса пĕтеççĕ. Çак вăхăтра сиплев курсĕсем ирттерме питех те лайăх вăхăт. Кĕрхи ĕçсене 12 градусран ăшăрах чухне тумалла. Хурт вĕçмелли шăтăка май пур таран пĕчĕклетмелле.

# Техĕмлĕ специ пулăшать

Ăсчахсем куркумин, шалфей, корица хăйсен сиплĕх вăйĕпе кун-çула вăрăмлатма пулăшнине палăртаççĕ, вĕсем рак, диабет чирĕсем пуçланас хăрушлăха чакараççĕ. Виçĕ специрен куркумин хăйĕн сиплĕхĕпе пĕрремĕш вырăнта, ракпа кĕрешме пулăшнипе танах çул кайнăçемĕн тухакан чирсене те асăрхаттарать, антиоксидант активлăхне ӳстерет. Тĕпчев çакна кăтартать, 1 уйăхра талăксерен 4-шар грамм çак приправăна çиекен çыннăн хулăм пыршă сиенленесси 40 процент чухлĕ чакнă, çакă вара рак чирне куçма пултарнă.

Иккĕмĕш вырăнта – корица. Вăл иккĕмĕш типлă сахăр диабечĕ вăхăтĕнче юнри сахăр шайне чакарма пулăшать. Çавăн пекех унăн экстракчĕ рак клеткисем сарăлассине чакарать тата вĕсене вĕлерет. Шалфей сиплĕхĕ те пысăк. Вăл ăс-тăн шайне çирĕплетме пулăшать, уйрăмах Альцгеймер чирĕ вăхăтĕнче ăна çини усăллă. Профилактика тĕлĕшпе унпа чĕрене çирĕплетме лайăх.

# Юн пусăмĕ пысăк-и?

Чылай çынна юн пусăмĕ пысăк пулни канăçсăрлантарать. Тухтăрсем юн пусăмне эмелсĕр шайлаштарма май пурри пирки калаççĕ. «Вечерняя Москва» изданире пĕлтернĕ тăрăх, ăна виçеллĕ тытас пулсан тĕрĕс апатланмалла. Гипертони чухне палтус, скумбри, килька пулă çини лайăх.

Фасоль ӳсен-тăран белокĕн çăл куçĕ шутланать, вăл холестерин шайне чакарма пулăшать. Йӳçĕ сĕт продукчĕсем вар-хырăм ĕçĕ çине лайăх витĕм кӳреççĕ, ку вара юн пусăмĕн шайлашăвне лайăхлатать. Пахча çимĕç çини юн тымарĕсене çирĕплетет, кали пулăшăвĕпе организмри ытлашши шыв тухать. Пылак илес пулсан вара йӳçĕ шăккалатри пылак лайăх.

Экспертсем палăртнă тăрăх, пысăк юн пусăмĕ сипленмест, тĕрĕс пурнăç йĕрки вара ăна шайлашуллă тытма пулăшать.

# Скандинави утти усăллă

Скандинави утти хăйне майлă спорт хусканăвĕ шутланать, çуран утакан çын йĕлтĕрпе каякан çын евĕр ятарлă туя çине таянса утать. Ку анлă сарăлнă хускану. Унăн патентне Марк Кантан 1997 çулта илнĕ, вăл «оригиналлă скандинави утти» ятпа тăрать.

Мĕнпе усăллă-ха вăл? Ăна халăх хушшинче анлăн сарассипе, уссине тĕпчевсемпе çирĕплетессипе нимĕç врачĕсем чылай тăрăшнă. Туяпа утнă чухне çурăм тата хул мышцисем уйрăмах лайăх ĕçлеççĕ. Тĕслĕхрен, чупнă чухне кĕлеткен çӳлти пайĕ хускану нумай тумасть, скандинави уттинче вара пĕтĕм мышцăн 90 процентĕ вăйлăн ĕçлет, ахаль утнă чухне – 70 процент кăна.

Тепĕр енчен пăхас пулсан туя çине таяннипе чĕркуççипе купарча суставĕсем çине, çавăн пекех ура лаппин шăмми çине тиев сахалтарах лекет. Çак утă ура ыратнине туякансем валли уйрăмах меллĕ. Мышцăсем вăйлă ĕçленипе энерги ахаль утнинчен самай тăкакланать. Тухтăрсем тулли кĕлеткеллĕ çынсене скандинави уттипе утма сĕнеççĕ. Вăл чĕре мышцисене çирĕплетме, кĕлеткене тĕрĕс тытма, ӳпкене лайăх сывлама пулăшать. Утнă чухне туя çине таянни те меллĕ.

Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, тăтăшах çакăн пек хусканусем тăвакансен юнри холестерин шайĕ чакать, пыршăлăх ĕçĕ йĕркеленет, организм пĕтĕмĕшле çамрăкланать.

Хальхи вăхăтра Германинче скандинави уттине тĕревпе хускану аппаратне суранлатнă, операци тунă хыççăнхи реабилитаци курсĕсене кĕртнĕ. Çавăн пекех çак сиплев физкультурине остеохондроз, сколиоз тата ытти чылай чиртен сипленнĕ чухне тума сĕнеççĕ. Вăл кирек хăш çулхи çынна та усăллă. Паллах, çак хусканăва тума пуçличчен врачпа канашлани ытлашши пулмĕ.

Пирĕн интервью

# Хресчен тăрăшулăхĕ куç умĕнче

*Кăçалхи çанталăк условийĕсем хресчене уй-хир ĕçĕсене вăхăтра тата пахалăхлă пурнăçлама май пачĕç. Ăна кура çĕр ĕçченĕ хĕл кунĕсене тулăх кĕлетсемпе кĕтсе илет. Ку – савăнăçлă пулăм. Алăкран хĕл сивви шакканă май, йывăрлăхсем умĕнче пуç усмасăр ĕçленисем уй-хир ĕçĕсене хаклаççĕ. Пĕрлехи пĕтĕмлетӳ çине тулли хурав шыраса Ял хуçалăхĕнче тата продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекен кунĕ умĕн округ администрацийĕн ял хуçалăхĕпе экологи пайĕн пуçлăхне Татьяна ПАВЛОВĂНА калаçăва чĕнтĕм.*

**– Татьяна Валерьевна, кĕрхи ĕçсене пĕтĕмлетесси – хресченĕн ырă йăли. Çавна май çĕр ĕçĕнчи кăçалхи çĕнĕлĕхсемпе ăнăçусем пирки пĕлес килет? тивĕçтереççĕ-и вĕсем сире тата туса ирттернĕ ĕçсем мĕнле тĕллевсем çуратаççĕ?**

– Кăçалхи çанталăк условийĕсене пăхсан, манăн пĕрешкел хурав парас килмест. Ăнланатăр пулĕ, кунта пĕрпеклĕх пулма та пултараймасть. Çапах та хресчен тăрăшулăхĕ паян кашни утăмрах яр уççăн курăнать. Ку вăл – округăн аталану çулĕ. Çуркуннехи тата çу пуçламăшĕнчи сивĕрех çанталăк ял хуçалăх культурисем çине хăйне евĕр витĕм кӳчĕ: пĕр енчен сăтăрçăсем аталанаймарĕç, тепĕр енчен акнă-лартнă культурăсем валли аталанса илме нӳрĕк пулчĕ. Кайран паян кунччченех уяр тăнă кунсем хресчене уй-хир культурисене тухăçлă ӳстерсе çухатусемсĕр пухса кĕртме май пачĕç. Унпа хуçалăхсем çителĕклĕ усă курчĕç: типĕ утă ытлă-çитлĕ янтăларĕç, паха сенаж хывса хăварчĕç, вырмана тăкаксăр ирттерчĕç. Халĕ каланине уйрăм кăтартусем çине куçарсан ума çакăн пек ӳкерчĕк тухать. Çу каçа округри пĕрлешӳллĕ кооперативсемпе хресчен фермер хуçалăхĕсем общеcтвăлла выльăх-чĕрлĕх валли хĕл каçма (сыснасемпе чăх-чĕпе шутламасăр) 30 центнер ытла апат единици хатĕрлерĕç. Уйрăммăн илсен, хуçалăхсем çу каçа 4800 тонна паха утă, 24850 тонна сенаж, 15000 тонна ытла силос, ытлă-çитлĕ тырă-улăм янтăларĕç. Çакă общеcтвăлла секторшăн хĕл кунĕсем выçă пулмасса шантарать.

**– Апат хисепне кура выльăх-чĕрлĕх те сахалланма кирлĕ мар, унăн продуктивлăхĕ те ӳсессе шанма пулать. Анчах выльăх фермисем хĕле хатĕр-и?**

– Паянхи куна выльăх-чĕрлĕх кĕтĕвĕ хушăнни ытларах ĕнесем тата майракаллă шултра выльăх хушшинче те, чăх-чĕпсемпе те, сурăх-качакасемпе те сисĕнет. Çак туртăм малашне те упранса юласса эпĕ шанатăп. Паянхи куна округри пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче майракаллă шултра выльăх пĕтĕмпе 5011 пуç, вăл шутра ĕнесем 1963 пуç, чăх-чĕп 771497 пуç, сурăх-качака 647 пуç шутланать. Сивĕ вăхăт çывхарнă май паянхи куна пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче фермăсене черетлĕ хĕле хатĕрлесе çитернĕ.

**– Кăçалхи тыр-пул тухăçĕ пирки пĕлес килет. Кунта ĕмĕтленни пурнăçланчĕ-и? Камсен кĕлечĕпаян ыттисенчен туллирех?**

– Вырăнлă ыйту. Çĕнĕ технологисене вăхăтра алла илнĕ, малта пыракан опытпа туллин усă курса хăватлă техникăпа ĕçленĕ хуçалăхсем кăçал çухатусен çулне пӳлсе тупăшлă ĕçлеме пултарчĕç. Хуçалăхсем 14348 гектар çинчи тырă-пулăна вăхăтра пуçтарса кĕртрĕç.

Кĕлетсен тулăхлăхĕ пирки калас пулсан, кăçал районĕпе гектар пуçне вăтамран 30 центнера яхăн тырă-пулă туса илсе ампарсене пурĕ 42690 тонна çĕнĕ тырă кĕртсе хутăмăр. Чи пысăк тухăç Суворов яч. хис., Е. Андреев яч. хис., «Свобода», «Ударник», «Герой» хуçалăхсем илчĕç. Пирĕн округра кăçал 315 гектар çĕр улми лартса ӳстерчĕç. Вăл шутран 100 гектарĕ – «Ударник» ял хуçалăх производство кооперативĕнче. Хуçалăхсем «иккĕмĕш çăкăра» гектар пуçне вăтамран 190 центнер кăларса пĕтĕмпе 6 пин тоннăна яхăн управа хучĕç.

**– Кĕр кунĕсем – çитес çулхи тухăç никĕсне хывса хăвармалли вăхăт. Округра кĕр аки епле иртрĕ?**

– Вырма вăхăтĕнчех кĕрхи культурăсем акма тухасси – пирĕн хресченĕн кун йĕркинчи ĕçĕ. Кунта çĕр ĕç технологине пăхăнни, ĕç культурине çирĕп тытса пыни тĕп пĕлтерĕшлĕ. Çакна курса тăрса тата паянхи ĕçе ырана хăвармасăр ĕçлеме хăнăхнă хуçалăхсем кăçал кĕске вăхăтра 7 пин гектар ытла кĕртрисем акрĕç. Уйрăмах ăнăçлă ĕçленисем: «Ударник», Суворов яч. хис., «Герой», «Свобода», «Оринино», Чкалов яч. хис., Е. Андреев яч. хис. пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе «Куснар» агрофирма.

Муниципалитет округĕнчи пĕрлешӳллĕ кооперативсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем, ял çыннисем çĕр ĕçĕн тухăçлăхне ӳстерессипе тăтăшах шыравра. Халĕ каланине пирĕн хресчен хăйĕн уй-хирĕнче 103 гектар пахча çимĕç тата 733 гектар техника культурисем туса илессипе çанă тавăрса ĕçлени çирĕплетет. Пахча çимĕçе çуррине майлă пуçтарса кĕртнĕ ĕнтĕ. Унăн вăтам тухăçĕ гектар пуçне 350 центнерпа танлашать. Округри хуçалăхсенче паян купăста касассипе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Май килнипе усă курса хамăр округри çĕр ĕçченне Ял хуçалăхĕнче тата продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекен кунĕ ячĕпе тăрăшуллă ĕçшĕн тав тăватăп, çитес вырсарникунхи уявпа саламласа малашне те пĕрле пуласса çирĕп шанатăп.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Октябрĕн 5-мĕшĕ – Учитель кунĕ

# Çамрăк ăру пуласлăхĕшĕн тимлеççĕ

*Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче Муркаш муниципалитет округĕнчи шкулсенче советниксем ĕçлеме пуçларĕç. Çак ĕçе муниципалитет шайĕнче федераци «Раççейри ача-пăчапа çамрăксен центрĕ» («Росдетцентр») патшалăх бюджет учрежденийĕн ертсе пыракан икĕ экcперчĕ Алевтина Рожкова тата Роман Григорьев йĕркелесе пыраççĕ. Эпĕ Учитель кунĕ тĕлне Алевтина РОЖКОВĂПА калаçуирттертĕм.*

**– Алевтина Владимировна, çĕнĕ вĕренӳ çулне пуçăнтăмăр, иртнине хыçа хăвартăмăр. Советниксен хăйсен ĕçне кăтартмалăх вăхăт пулчĕ тесе шухăшлатăп, вĕсен ĕçĕ пирки мĕн каланă пулăттăр?**

– Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче округ шкулĕсенче 22 советник **(сăн ӳкерчĕкре)** ĕçлеме пуçларĕ, вĕсем – директор пулăшуçисем. Советниксем хăйсен вăй-халне, пĕлĕвне ачасен ăнăçлăхĕшĕн шеллемеççĕ. Учитель ăру пуласлăхĕшĕн, вĕсен тавракурăм аталанăвĕшĕн хăй çине питех те пысăк яваплăх илет.

Раççейре çак çула педагогсемпе наставниксене халаллани правительство шайĕнче вĕренӳ ĕçĕ çине тимлĕх ытларах уйăрма тытăннине çирĕплетет. «Вĕренӳ» наци проекчĕн «Патриотла воспитани» пĕтĕм Раççей проекчĕ шайĕнче 2022 – 2023 вĕренӳ çулĕнче «Ачалăх навигаторĕсем» проект ĕçлеме пуçларĕ. Унпа танах директорăн воспитани енĕпе тата ача-пăча общеcтвăлла пĕрлешӳсемпе ĕçлекен пулăшуçисен – советниксен – должноçĕсене çирĕплетрĕç. Тепĕр майлă каласан, вĕсем вĕренӳ уçлăхĕнчи çыхăнуçăсем – шкул ачисене, педагогсене, паллах, ашшĕ-амăшне те пĕрлештерекенсем – пулса тăчĕç.

Кашни ача хăйне валли кăсăклă тата усăллă ĕç тупни питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ, вăл хăйĕн потенциалне уçма пултартăр, пуçарулăхне кăтарттăр, ăна вара пирĕн советниксем пулăшса пырĕç.

**– Çапах та калаçăва тĕплĕнрех ĕç çине куçарас пулсан?**

– 2022 – 2023 вĕренӳ çулĕнчи воспитани ĕçĕн календарь планĕ тăрăх, директор советникĕсем вĕренекенсемпе, учительсемпе пĕрле федераци концепцине пурнăçлама тытăнчĕç. Проект пуçланнăранпа пирĕн округра шкул ачисен 95 процентĕ 59 мероприятие хутшăнчĕ. Воспитани советникĕсемпе, аслă вожатăйсемпе, хушма вĕренӳ педагогĕсемпе эрнесерен онлайн-канашлусем, уйăхсерен канашлусем ирттеретпĕр. «Вĕренӳ вырсарникунĕ» регион проекчĕн тĕп методика темисенчен пĕри «Шкулти хăй тытăмлăх органĕн аталанăвĕ» тема пулса тăрать.

«Вĕренӳ вырсарникунĕ» проекта 950 ытла ача хутшăнчĕ, çулталăк тăршшĕпе 63 площадкăра ĕçлерĕмĕр. Муркаш округĕнчи, республикăри паллă çынсемпе тĕл пулусем йĕркелерĕмĕр.

«Ачалăх навигаторĕсем» проектпа килĕшӳллĕн ашшĕ-амăшне анлăн паллаштарас, хушма тата професси пĕлĕвĕсем пирки каласа кăтартас тĕлĕшпе Муркаш округĕнче республикăри ашшĕ-амăш форумĕ иртрĕ. Унта Муркаш, Шупашкар, Етĕрне округĕсенчи советниксем, ашшĕ-амăшĕсем, ачасем хутшăнчĕç. Çавăн пекех хамăр округра 6 зонăра форумсем ирттертĕмĕр, вĕренӳ заведенийĕсемпе килĕштерсе ĕçлетпĕр.

2023 – 2024 вĕренӳ çулĕнче округра вĕренекенсен 20 хăй тытăмлăх органĕ вăйра тăрать. Кăçал 5 шкулта Раççейри ачасемпе çамрăксен «Пĕрремĕшсен юхăмĕ» пĕрлешĕвĕн пуçламăш уйрăмне уçрăмăр. Çулталăк вĕçлениччен çак ĕç пур шкулта та пулса иртмелле.

**– Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, кĕçĕн класри ачасем «Раççей орленокĕсем» программăпа ĕçлеме пуçларĕç.**

– Иртнĕ вĕренӳ çулĕнчен кĕçĕн классенчи ачасем социаллă активлăхлă «Раççей орленокĕсем» программăпа ĕçлеме пуçларĕç. Çак тапхăр тĕлне пирĕн регионта 119 пин ытла ача вĕренет, вăл шутра асăннă программа порталĕнче пуçламăш ӳсĕмри 79 класа регистрациленĕ.

Çак ĕçĕн тĕп темисем: Тăван çĕршыв, çемье, çут çанталăк, туслăх, ĕç, ыр кăмăллăх. Класс ертӳçисемпе советниксем йĕркеленипе ачасем ку енĕпе тăрăшса ĕçлесе пычĕç, «7 трекри орленок» ята тивĕçрĕç. Воспитани ĕçĕн советникĕсем класс ертӳçисене пулăшса пыраççĕ. Çак программа шайĕнче май уйăхĕнче «Раççей орленокĕсем» мероприяти иртрĕ.

Шкулсенче тунтикунсерен «Калаçу пĕлтерĕшли пирки» сехете советниксем активлă хутшăнаççĕ. Кашни уйăхра икĕ хутчен çул çитменнисен ĕçĕн тата вĕсен правине хӳтĕлекен комисси ларăвĕ КДН тата ПДН учетĕнче тăракан ачасен ĕç-хĕлне сӳтсе явать. Иртнĕ çул вĕçĕнче «Ачалăх навигаторĕсем» пĕтĕм Раççей проекчĕн муниципалитетри икĕ координаторĕ «Вĕренӳ» наци проекчĕпе пăхнă вĕренӳре пулчĕç. 20 советник Мускавпа Санкт-Петербургра квалификацие ӳстерчĕç.

Ресурс центрĕ пулăшнипе республикăри 300 ытла вĕренекен икĕ енĕпе «Солнышко» лагерьте ĕçлерĕ. Мăн Сĕнтĕр шкулĕн советникĕ Наталья Кольцова 2 лидерпа тата 10 вĕренекенпе пĕрле пĕр сменăра çавăнти ĕçе хутшăнчĕç. Пĕтĕмпе вара 28 вĕренекен профиль лагерĕнче канма пултарчĕ.

Çулталăк хушшинче пирĕн советниксем ачасен общеcтвăлла организацийĕсемпе тата вĕренекенсен хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле чылай ĕç турĕç. Ачасемпе çамрăксене ăсталăх ĕçне явăçтарнипе пĕрлех сывă пурнăç йĕрки ытларах пăхăнасси çине пысăк тимлĕх уйăрчĕç.

**– Советниксен ĕçĕ ачасен çитĕнĕвĕ çинче еплерех курăнать?**

– Советниксен тăрăшулăхĕ ачасен çитĕнĕвĕнчен лайăх курăнать. Шурча, Ярапайкасси, Çатракасси шкулĕсен вĕренекенĕсем Карина Иванова, Ульяна Жукова, Елизавета Трофимова, Катерина Юрская пĕтĕм Раççейри «Артек», «Орленок» ача-пăча центрĕсенче пулса курчĕç. Ульяна Жукова çавăн пекех Мускавра иртнĕ ачасемпе çамрăксен съездне хутшăнма тивĕç пулчĕ. Ильинка шкулĕн 8 класра вĕренекенсен ушкăнĕ пĕтĕм Раççейри «Прогулки по стране» конкурсра çĕнтерчĕ. Ильинка шкулĕн вĕренекенĕ Виктория Лоцманова тата Ярапайкасси шкулĕн вĕренекенĕ Ульяна Жукова Чул хулара иртнĕ университет смение хутшăнчĕç. Ильинка шкулĕн вĕренекенĕ Олеся Васильева Санкт-Петербургри университет сменинче пулчĕ. Ярапайкасси шкулĕн вĕренекенĕсем Мария Силова – Мускав хулинчи, Антонина Николаева Ĕпхӳ хулинчи университет смение хутшăнчĕ.

Çитес вăхăтра Чăваш Енти 59 вĕренекен, вăл шутра Муркаш округĕнчен 5 ача, «Артек» центрта иртекен лидерсен форумне хутшăнĕç. Ачасемпе советниксен çитĕнĕвĕсем татах та пур.

Муркаш округĕнчи советниксен ĕçне республикăра пысăка хурса хакларĕç. Çак команда республикăри «Взлет» пултарулăх конкурсĕнче «За любовь к муниципальному округу» ятарлă хавхалантарăва тивĕçрĕ.

**– Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнчи плансем еплерех?**

– 2023 – 2024 вĕренӳ çулĕнче малалла та ачасене воспитани парассипе, вĕсене тĕрлĕ конкурса хутшăнтарассипе, советниксене методика пĕлĕвĕ парассипе анлăн ĕçлесе пыма, Раççей тата республика шайĕсенчи ку тĕлĕшри программăсене хутшăнма, ашшĕ-амăшĕпе ĕçлессине улшăнусем кĕртме палăртатпăр.

Директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен советникĕсен команди – çамрăк, пултаруллă, пуçаруллă. Çамрăк ăрăва воспитани парассипе пирĕн ĕçлемелли нумай. Педагогпа наставник çулталăкĕ вĕçлениччен вăхăт нумаях юлмасть, вĕсене халалланă мероприятисем вара сахал мар.

Эпĕ вĕрентекенсене, наставниксене, советниксене пĕрлехи ĕçшĕн тав тăватăп, малашне те çитĕнӳсем патне пĕрле утасса шанатăп.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**



Объявления

**Дорого!** Куплю быков, коров, телок. Вынужденный забой по высоким ценам. **Тел. 8-903-357-72-79. Володя.** 2-10.

* * *

Организация закупает скот по высоким ценам: коров, бычков, телят и вынужденный забой. Дорого! Вася. Тел. 8-937-015-00-09. 2-17.

* * *

Куплю бычков, коров, телок и вынужденный забой. Олег. Тел. 8-937-016-00-57. 20-23.

* * *

**КУПЛЮ коров, бычков, телок от месяца на откорм.** Дорого. Тел. 8-937-391-23-33. 7-10.

* * *

**КУПЛЮ** бычков от 20 дней до 700 кг, коров, телок. Дорого. Вынужденный забой. Федя. Тел. 8-937-952-33-80. 7-10.

* * *

Вăкăр, тына, ĕне хаклă хакпа туянатăп. Тел. 8-937-957-91-51. 7-10.

* * *

**КУПЛЮ коров, телок.** Дорого. Тел. 8-900-330-19-86. 7-10.

* * *

ĔНЕ, ВĂКĂР, ПĂРУ, СУРĂХ ТУЯНАТĂП. Тел. 8-905-343-60-63. 10-23.

* * *

Закупаю коров, бычков, телок, овец, баранов, коз, козлят. Тел. 8-987-663-42-00. 15-15.

* * *

Купим овец, овец с ягнятами, коз, коз с козлятами. Тел. 8-927-864-89-00. 2-10.

* * *

ĔНЕ, ВĂКĂР, ТЫНА ПĂРУСЕМ, СУРĂХСЕМ ТУЯНАТПĂР. Выдаем документы на получение страховых выплат, в том числе и на вынужденный забой. Тел. 8-905-341-69-25. 8-20.

* * *

**КУПЛЮ ДОРОГО!** Бычков, коров, телок, овец, лошадей и вынужденный забой. Выдаем документы на получение страховых выплат. Тел. 8-961-344-03-82. Андрей. 2-10.

* * *

**КУПЛЮ ЛОМ ЧЕРНЫХ И ЦВЕТНЫХ МЕТАЛЛОВ, ПЛАТЫ, РЭЛ, ТЕХНИЧЕСКОЕ СЕРЕБРО, действует спец. цена. ДОРОГО. САМОВЫВОЗ. АВТОВЕСЫ. Тел. 8-961-345-29-63.** 3-10.

* * *

**ЗАКУПАЕМ ДОРОГО ПУХ-ПЕРО СВЕЖЕЕ И Б/У, ПРИНИМАЕМ: ПОДУШКИ, ПЕРИНЫ, ПУХ В СУХОМ И МОКРОМ СОСТОЯНИИ.** Самовывоз. С. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23. Тел. 8-908-300-78-79. Василий. 9-10.

* * *

**КУПЛЮ ЛОМ ЧЕРНЫХ И ЦВЕТНЫХ МЕТАЛЛОВ, Б/У АКБ. САМОВЫВОЗ, АВТОВЕСЫ. ДОРОГО.** С. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23. Тел. 8-908-300-78-79. 9-10.

* * *

Купим-вывезем любой металлолом: холодильники, стир. машины, газ. плиты и другое. Пух-перо, перины, подушки, радиодетали, платы. Тел. 8-902-016-74-25, skupka-21.ru 10-20.

* * *

ЗАКУПАЮ ОВЕЦ, КОЗ НА МЯСО. Тел. 8-967-473-68-00. 5-10.

* * *

Куплю бычков, коров, телок, молодняк и вынужденный забой. Тел. 8-909-301-59-99. 3-3.

* * *

Куплю овец, овец с ягнятами и козлят. Тел. 8-960-313-78-01. 1-4.

**Закупаю коров, бычков, телок, овец и вынужденный забой. Тел. 8-960-308-82-63.** 5-10.

**Куплю бычков на откорм с 1 месяца до 8 месяцев, телок, овец. Тел. 8-987-739-40-25.** 3-3.

**ЗАО «Чебоксарское предприятие «СЕСПЕЛЬ»**
примет на работу женщин Моргаушского муниципального округа по следующим специальностям:
- **операторы ЧПУ,**
- **сборщики,** 1-5.
- **комплектовщики,**
- **складские работники.**

**Официальное трудоустройство в соответствии с трудовым законодательством РФ.**
**Сдельная оплата труда от 50000 руб.**
**Обращаться по тел. 8-919-650-78-60.**

Купим чувашские наряды из монет (монеты с отверстиями, мелочь СССР) домоткань (пир, платья, вышивки), иконы, самовары и т.д., пух-перо (подушки, перины), рога, металл, радиолом (платы, радиодетали), телевизоры, видеомагнитофоны, ДВД, компьютеры, муз. центры, телефоны (сотовые, домашние), аппаратуру: проигрыватели, магнитофоны (кассетные, катушечные и т.д) усилители, колонки, радиолы, приемники, фотоаппараты любые, часы любые, шв. машинки, пластинки, кассеты, книги, открытки СССР, значки, бутыли, пивные кружки, прялки, лапти, коромысла, мебель, сундуки, сапоги, форма, гармони/баяны и не только. Тел. 89278520181 (skupka-21.ru) 19-30.

* * *

В ШОМИКОВСКИЙ ДОМ-ИНТЕРНАТ ТРЕБУЮТСЯ: инженер, зав.складом, повар, сиделки, специалист по социальной работе, специалист по охране труда, делопроизводитель, врач невролог, машинист по стирке, инструктор по трудовой терапии, культорганизатор, библиотекарь. Зарплата достойная, своевременная. Тел. 8(8352)70-93-13, 8(8352) 70-93-12. 8-10.

* * *

В мебельный цех в с. Моргауши требуются водитель, столяр-плотник. Тел. 8-927-858-88-66. 5-5.

* * *

Требуется сторож в частный дом со всеми удобствами, можно спать. Возможно официальное трудоустройство. З/п от 20 000р. Телефон для связи 89603142442. Алексей. 4-5.

* * *

Требуется работник (или семья) по хозяйству, уборка дома, огород. Возможно официальное трудоустройство. Зарплата по собеседованию в зависимости от объема выполненных работ. Телефон для связи 89603142442. Алексей. 4-5.

* * *

В Моргаушский кирпичный завод требуются: водитель СЕ (з/п от 60000 руб.), загрузчик-выгрузчик (з/п от 35000 руб.), стропальщик с возможностью обучения (з/п от 40000 руб.). Тел. для справок: 8(83541)62-3-47. Обращаться по адресу: с. Моргауши, ул. Восточная, д. 1. 2-2.

* * *

Охранной организацией в г. Чебоксары набираются охранники. 4 разряд оплата 1800 – 2000 руб., проезд частично оплачивается; 6 разряд – 1900 – 2400 руб. (предусмотрена компенсация медицинской проверки на 6 разряд). Проезд с района компенсируется. Тел. 8-927-844-49-69. 2-2.

* * *

Вахта в ПИТОМНИК. З/п за 15 дней – 34500 руб. Проживание, питание бесплатно. Тел. 8-905-341-58-01.

**ТРЕБУЮТСЯ РАБОЧИЕ**
на производство теплоблоков в г. Чебоксары. 1-4.
Возможна вахта. Жилье предоставляется.
Проезд за счет компании.
**З/п 2500 руб. в день.**
**8-927-862-75-29** – Евгений.

**ПРОДАЕМ В МОРГАУШАХ ПЕСОК РЕЧНОЙ И КАРЬЕРНЫЙ, ГРАВМАССУ, ОПГС, ЩЕБЕНЬ, БОЙ КИРПИЧА И БЕТОНА, ГРУНТ и т.д.** Доставка по району в любые сроки. **НЕДОРОГО.** Тел. 8-905-345-96-62. 4-10.

## ОБУЧЕНИЕ ПО ИСПОЛЬЗОВАНИЮ СИЗ

С 01 сентября 2023 г. вступили в силу «Правила обеспечения работников средствами индивидуальной защиты и смывающими средствами», утв. Приказом Минтруда России от 29.10.2021 г. №766н и «Единые типовые нормы выдачи средств индивидуальной защиты и смывающих средств», утв. Приказом Минтруда России от 29.10.2021 №767н.

Обучение по использованию (применению) СИЗ подлежат работники, применяющие СИЗ, применение которых требует практических навыков.

Председатель и члены комиссий по проверке знания требований охраны труда, лица, проводящие обучение по использованию СИЗ, специалисты по охране труда, а также члены комитетов (комиссий) по охране труда проходят обучение в учебном центре. Периодичность обучения по использованию СИЗ не реже одного раза в три года.

**ЧОУ ДПО УМЦ «Безопасность труда».**

**ВАХТА от 30 смен**
**ПРОЖИВАНИЕ, ПИТАНИЕ БЕСПЛАТНО**
**Только РФ**
**ЗП от 90500 руб.**
**8-967-020-92-06**

**9 октября с 9.00 до 17.00 ч.**
**в ДК с. Моргауши**
**ПРИГЛАШАЕМ ВАС НА ЯРМАРКУ МЕХОВЫХ ИЗДЕЛИЙ**
**новейших моделей (норка,мутон)**
производство г.Пятигорск
Ставропольский край



*а также*
**дублёнки *куртки*
*женские и мужские*
*головные уборы*
*АКЦИЯ!!!*
*Меняем старую шубу на новую с доплатой*
*Кредит на месте без первоначального взноса*
Ренесанс банк №3354 от 26.04.2013
Почта банк №650 от 25.03.2016

**Салон штор «КСЕНИЯ»** предлагает: тюль, портьеры; карнизы, аксессуары; жалюзи, рулонные шторы; покрывала, подушки; пошив. Скидки до 60%. Адрес: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 2, 2 этаж (здание бани). Тел. 8-937-370-44-99. 37-51.

* * *

Продаю доломитовую муку (антиподзолочник) для раскисления кислых почв. Уничтожает хвощ полевой, мокрицу, проволочник. Фасовка 30 кг. Доставка. Тел. 8-960-303-05-29. 3-3.

* * *

Навоз, Торф, Перегной, Чернозем, Грунт, Песок, Гравмасса, Гравий, Щебень, Бой кирпича с доставкой. Тел. 8-905-198-63-88. 1-13.

* * *

Сумалли сĕтлĕ качака сутатăп. Тел. 8-905-341-40-04.

* * *

Декабрьте виççĕмĕш пăруламалли хура ĕне сутатăп. Тел. 8-917-667-35-51.

* * *

Октябрь вĕçĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура тĕслĕ тынашки сутатпăр. Тел. 8-919-657-63-21.

* * *

Пĕрре пăрулана сумалли хура-шурă тĕслĕ ĕне тата 2 уйăхри пăру сутатпăр. Тел. 8-937-396-92-66.

* * *

Продаю поросят 1,5 – 2 месячных по 2500 руб. Тел. 8-965-688-97-62. 1-3.

* * *

Продаю бычков мясной породы, возраст один месяц; кроликов разных пород. Тел. 8-962-599-55-89.

**ТАВ ТĂВАТПĂР**

Пирĕн юратнă ывăлăмăра, пиччене, Хорнуй ялĕнче çуралса ÿснĕ, çар тивĕçне пурнăçланă вăхăтра пуç хунă Андрей Сергеевич Николаева юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн пĕтĕм тăван-хурăнташа, тус-юлташĕсене, Муркаш райпо коллективне, «БТИ» пĕрлешÿ ĕçченĕсене, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн администрацине, Муркаш муниципалитет округĕн администрацине, Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариатне, «Август» фирма ĕçченĕсене, пĕрле службăра тăнă юлташĕсене, командирĕсене, унпа сывпуллашма пынă мĕнпур çынна чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр. Эсир ырă туни каялла ырăпах таврăнтăр. Пурне те сире таса сывлăх сунатпăр.

**Николаевсен çемйи.**

**ТАВ ТĂВАТПĂР**

Пирĕн çывăх çыннăмăра – Патаккасси ялĕнче пурăннă Маргарита Михайловна Садовниковăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, çак йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн пĕтĕм тăван-хурăнташа, пĕрле вĕреннисене, юлташĕсене, кÿршĕсене, ял-йыша, унта пынă мĕнпур çынна чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр. Эсир ырă туни сире ырăпах таврăнтăр. Пурне те таса сывлăх сунатпăр.

**Садовниковсен çемйи.**

**Срочный ремонт, ремонт и пошив швейных изделий. Швейная мастерская на 2 этаже здания вокзала «Никита». Тел. 8-927-866-16-47. Таня.** 26-38.

* * *

**Тюкланă тата рулонти утă, сĕлĕпе люцерна хутăш утă сутатпăр. Леççе паратпăр. Çамрăк качакасемпе сурăхсем сутатпăр. Тел. 8-927-868-14-39.** 3-10.

* * *

**Продаю земельный участок 28 сот. под ИЖС в с. Б. Сундырь. Тел. 8-906-387-66-97.** 1-5.

* * *

**ИП КУДРЯШОВ. Монтаж систем отопления, водоснабжения, канализации; замена, установка газовых котлов и насосов. Установка, замена дымоходов. Обращаться по адресу: ул. Чапаева, д. 44, магазин «ДУЭТ». Тел. 8-917-668-12-87, 8-965-682-39-15.** 10-10.

* * *

**Продаю однокомнатную квартиру в с. Моргауши по ул. Ленина, пл. 33,4 кв. м. Цена договорная. Тел. 8-900-330-54-21.**

**ИП КУДРЯШОВА. НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ: глянцевые, матовые, сатиновые и т. д. Обращаться в магазин «Дуэт». Тел. 8-965-682-39-15, 8-919-652-20-87.** 2-10.

* * *

**ООО «Бездна» (д. Ярабайкасы) продает ячмень, пшеницу, молотую зерносмесь (пшеница, ячмень, кукуруза), готовые комбикорма собственного производства для кур-несушек и дойных коров, ЭКД. Тел. 8-953-018-00-61, 8-937-015-14-12.** 5-10.

* * *

**СХПК ПЗ им. Е. Андреева реализует ячмень и пшеницу, урожай 2023 года. Возможна доставка по району. Тел. 8-937-012-73-75, 8-937-012-51-31, 8-937-012-13-34.** 9-10.

* * *

**Продаю молочную козу, молоко вкусное, жирное, без запаха. Тел. 8-967-473-95-81.**

* * *

**Продается 1-комнатная квартира по улице 50 лет Октября, 28. Тел. 8-917-064-67-63.**

**ПРИГЛАШАЕМ НА ВОЕННУЮ СЛУЖБУ ПО КОНТРАКТУ**
**Денежные выплаты для граждан, заключивших контракт**
**195 000 ₽** единовременно
**от 204 000 ₽** в месяц
единовременная выплата в размере
**50 000 ₽**
согласно Указу Главы Чувашской Республики от 01.06.2023 при участии в специальной военной операции



**Звони сейчас: 8 (8352) 45-20-97**
**Адрес: Константина Иванова, 30**

Мăшăрĕ, ачисем, кинĕ, мăнукĕсем Мăн Шаптак ялĕнче пурăннă
**Константин Иванович**
**ВАСИЛЬЕВ**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки чĕререн хурланни çинчен пĕлтерессĕ.

Муркашри шалти ĕссен пайĕн коллективĕ кунта ĕçлекен А.К. Васильев сотрудникăн ашшĕ
**Константин Иванович**
**ВАСИЛЬЕВ**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланса пĕлтерет.

Муркаш райпо коллективĕ Лантăш ялĕнчи лавккара сутуçăра вăй хунă ĕç ветеранĕ
**Маргарита Михайловна**
**САДОВНИКОВА**
йывăр чирленĕ хыççăн вилнĕ пирки çемйипе, çывăх çыннисеме, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркашри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вăтам шкул коллективĕ кунта ют чĕлхе вĕрентекен В.В. Хрусталевăн ашшĕ
**Варсанофий Афанасьевич**
**САДИКОВ**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çемйипе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Прогноз погоды** По данным сайта Gismeteo

| | Пт 6 | Сб 7 | Вс 8 | Пн 9 | Вт 10 | Ср 11 | Чт 12 | Пт 13 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| **Облачность** | | | | | | | | |
| **Температура** (день/ночь) | +14 / +7 | +9 / +5 | +8 / +4 | +3 / +1 | +6 / 0 | +5 / +1 | +8 / +1 | +18 / +9 |
| **Ветер** (скорость/направление) | 9 з | 12 сз | 13 юз | 9 сз | 9 з | 6 з | 14 с | 16 з |
| **Давление мм/рт.с.** (день/ночь) | 744 / 738 | 738 / 730 | 726 / 721 | 739 / 727 | 745 / 741 | 747 / 744 | 751 / 746 | 749 / 743 |
| **Влажность, %** | 75 | 76 | 79 | 86 | 77 | 86 | 77 | 75 |

